**Приложение 2**

к методическим рекомендациям
по проведению учебно-воспитательных мероприятий в муниципальных и государственных образовательных организациях Чувашской Республики, посвященных трудовому подвигу строителей Сурского и Казанского оборонительных рубежей
(все разработки предсавлены в авторской редакции)

**Приложение 2.1.**

## Конспект занятия для детей подготовительной к школе группы на тему «Сурский рубеж: незабытый подвиг»

Казакова Надежда Константиновна,
воспитатель по ИЗО деятельности,
Уткина Лилия Ивановна, воспитатель
МБДОУ «Детский сад № 11 «Ручеек»
г. Чебоксары

**Цель:** Формирование патриотических чувств на основе ознакомления с героическим трудовым подвигом строителей Сурского и Казанского оборонительных рубежей

**Форма проведения:** творческая мастерская.

**Задачи:**

- развивать интерес детей к историческому прошлому нашей страны, военной истории Отечества;
- дать представления о Сурском оборонительном рубеже и значении их возведения в годы войны;
- формировать представление о героизме тружеников тыла при возведении оборонительных сооружений в годы Великой Отечественной войны;
- познакомить детей с памятниками строителям Сурского оборонительного рубежа;
- уточнить знания детей об орудиях труда, которые использовались при возведении оборонительных рубежей;
- формировать у детей способность к созданию выразительного образа памятника, посвященного героизму строителей Сурского рубежа в смешанной технике: «пластилинография и акварель» в самостоятельной творческой деятельности.
- Развивать чувство дружбы и взаимопомощи.

**Оборудование:**

Ноутбук, экран (интерактивная доска).

**Материалы:**

- презентация, видеоролик об оборонительных сооружениях, возводимых в Чувашии в годы Великой Отечественной войны;
- карточки с изображенными на них орудиями труда и техники для земляных работ для проведения дидактической игры;
- бумага А-3 на 2-х детей, коробки с пластилином, акварельные краски, коробки с восковыми мелками по числу детей, стеки, стаканчики с водой, кисти, салфетки.

- напечатанные «памятные таблички на памятник» из бумаги по количеству детей.

**Ход занятия:**

Воспитатель: Ребята, увидела недавно необычный памятник. Вот хочу у вас узнать, знаете ли вы, что это за памятник? Кому он посвящен?

*(Воспитатель показывает детям изображение памятника строителям Сурских оборонительных рубежей, стоящий недалеко от моста через реку Суру)*

- Что мы видим на основании из камня?

- А хотели бы узнать, что это за необычный памятник?

- Давайте прочитаем, что же указано на табличке.

*(Показывает подготовленную табличку с надписью. Дети читают вместе с воспитателем).*

- Что это за Сурский рубеж? О каких строителях идет речь?

Я предлагаю вам посмотреть небольшой видеоролик, который я вам подготовила.

*(Дети смотрят видеоролик о Великой Отечественной войне и о строительстве в Чувашии оборонительных рубежей в самом начале войны)*

**Воспитатель:** Осенью 1941 года, когда враг уже был под Москвой, было принято решение строить оборонительные рубежи в глубоком тылу на берегах рек. На случай, если немцы пойдут вглубь нашей страны, им должны помешать эти оборонительные сооружения. Так появились Сурский оборонительный рубеж и Казанский обвод.

Воспитатель: Ребята, предлагаю посмотреть на карте, где располагались эти оборонительные сооружения.

*Дети рассматривают линии оборонительных рубежей на карте.*

**Воспитатель:** Если бы во время Великой Отечественной немцы дошли до Чувашии, то натолкнулись бы на оборонительные сооружения. Их задача – задержать танки и не дать врагу пройти дальше.

Мобилизацию населения в Чувашии объявили в конце октября 1941 года. Почти все мужчины к тому времени ушли на фронт, так что «на окопы» отправляли всех, кто мог трудиться, – это были женщины, старики и даже дети.

- Посмотрите на эти фотографии. *(Слайды с архивными фотографиями)*

Трудились по 10 часов в день без выходных, в любую погоду, а зима в тот год выдалась особенно холодной, временами температура воздуха опускалась до минус 40 градусов.

Стрителям оборонительных сооружений приходилось жить в землянках и шалашах, наскоро собранных из хвойных лапок, соломы, хвороста. Несмотря на все лишения и трудности, люди старались изо всех сил, понимали ответственность перед Родиной.

Техника тогда была редкостью, поэтому работы шли вручную – использовались лопаты, кирки, кувалды, лом, тележки.

- Вот почему на памятнике мы видим… Ребята, подскажите. *(Дети называют лом, лопату и кирку).*

- Ребята, предлагаю не только вспомнить названия этих орудий труда, но и представить, как они выглядят.

Дидактическая игра «Выбери орудия труда». *Воспитатель показывает детям карточки с изображением разнообразных орудий труда и техники для обработки земли.*

- Выберите, пожалуйста, изображения соответствующих орудий труда, которые использовались во время сооружения линии обороны в те годы. Объясните свой выбор.

- Ребята, проявляя героический труд за 45 дней сделано было практически невозможное – было построено 380 километров Сурского рубежа.

В память о героизме тружеников тыла при сооружении оборонительных рубежей, чтобы люди помнили, стали создаваться памятники. Первый памятник строителям Сурского рубежа был поставлен в 2002 году в Мордовии недалеко от поселка Ясная Поляна. *(Показ памятников на экране).*

В 2010 г. недалеко от моста через реку Суру был установлен памятник, который мы увидели вначале. В 70-летний юбилей Победы памятник строителям Сурского рубежа в 2015 году был установлен в селе Порецкое.

Воспитатель: Следующий 2021 год в Чувашии объявлен Годом, посвященным трудовому подвигу строителей Сурского и Казанского оборонительных рубежей. Правительство Чувашской республики приняло решение о создании мемориала памяти, чтобы на века сохранить память об этих трагических событиях. Ещё один памятник появится в Козловском районе, возле села Байгулово. А 04 сентября Глава республики Олег Николаев заложил камень будущего мемориала «Строителям безмолвных рубежей». Его открытие запланировано на октябрь следующего года в парке «Победа» города Чебоксары. *(Слайд)*

И ещё в Чувашском книжном издательстве идет работа над книгой, посвященной народному героизму. *(Показ на экране обложки книги).*

- Ребята, кому бы вы хотите рассказать о том, что мы сегодня узнали? А мы можем ещё и нарисовать этот необычный памятник.

- Обратите внимание на формат бумаги. Подумайте, как лучше изобразить памятник на листе, если вы будете рисовать вместе. Вспомните правило для работы в парах. Договоритесь о том, кто, что и как будет изображать. Например, кто-то из вас может мелком рисовать контуры памятника, а другой – делить пластилин на кусочки и формировать камни. А затем вместе можно «укладывать камни» на контур памятника.

- На выбор у нас есть восковые мелки, пластилин и акварельные краски. Ребята, придумайте, как можно изобразить каменное основание памятника, чтобы оно казалось объемное? Вы интересно придумали, выложить основание из кусочков пластилина, выглядит объемно и очень похоже, молодцы!

- Для большей правдоподобности хочу предложить вам уже готовые распечатанные таблички с названием памятника, которые можно использовать для его оформления.

- Для изображения фона вы можете на выбор использовать акварельные краски или восковые мелки. А если на заднем фоне листочки на деревьях вы также выполните в технике пластилинографии, думаю, будет также необычно и красиво.

Воспитатель и дети оформляют выставку из готовых работ, беседуют, отмечая в каждой работе особо выразительные моменты.

Воспитатель: Глядя на нашу выставку, мне вспомнилось стихотворение Михаила Васильевича Колчина, уроженца Порецкого района Чувашии, посвященное строителям Сурского рубежа, хотите я прочитаю стихотворение:

Затянулись земли раны
Много лет прошло уже
Так их мало ветеранов,
Что на Сурском рубеже
Землю мерзлую долбили

Твердую, как сам бетон.
Помнят все, как страшный сон:
Обмороженные руки,
Под собой, не чуя ног,
Превозмочь все нужно муки
Чтобы враг пройти не смог…

Бесконечны павших списки,
Но мы памяти верны –
Вам поклон от всех нас низкий
Отстоявшим честь страны.

**Приложение 2.2.**

## Сценарий мероприятия
## в ДОУ, посвященного
## году памяти строительства Сурского и Казанского рубежей

Составители:
Федина Марина Васильевна
заведующая,
Егорова Елена Викторовна
педагог-психолог,
Муниципальное автономное
дошкольное образовательное учреждение
«Детский сад № 200» города Чебоксары
Чувашской Республики

**Цель:** познакомить детей с трудовым подвигом во время Великой Отечественной войны – строительство Сурского и Казанского оборонительных рубежей.

**Задачи:**

- формировать уважение к истории своей страны, своего народа;
- закладывать в сознание воспитанников чувств долга, ответственности;
- развивать интерес воспитанников к историческому прошлому нашей страны;
- мотивировать формированию чувства гордости за своих земляков, за место, где они родились и живут;
- расширять знания о трудовом подвиге во время ВОВ.

**Оборудование:** ноутбук, интерактивная доска, презентация, посвященная строительству Сурского оборонительного рубежа, музыкальный центр.

**Предварительная работа:** беседа о необходимости строительства Сурского оборонительного рубежа в годы Великой отечественной войны, просмотр фотографий и видеороликов, чтение статей про строительство. Заучивание стихотворений и песен.

**Ход мероприятия.**

*На мероприятие приглашены ветераны ВОВ, дети войны. Под музыку патриотического содержания дети входят в музыкальный зал и встают в полукруг. Дети рассказывают стихи.*

**1 ребенок:**

Декабрь сорок первого. Фашисты у Москвы.
И принято решение на берегу Суры
Построить укрепления, чтоб немцы не прошли.

**2 ребенок:**

Зима. Мороз стоял трескучий,
А люди ломом и киркой крушили эти кручи.
Им не хватало тёплой обуви, еды,
Но все же они выстояли, построили, смогли.

**3 ребенок:**

9 мая здесь многолюдно,
Дети приносят букеты цветов.
Помнят сельчане, как было трудно
И мы не забудем тот подвиг отцов!

*Дети присаживаются на стульчики. На экране включается презентация*

**Ведущий:**

Прошло много лет, как закончилась Великая Отечественная война. Все дальше уходит в историю то время и все меньше остается живых свидетелей этих страшных дней. 75 лет мы вспоминаем с глубоким уважением и почтением своих предков, воевавших и отдавших жизни за нашу Родину. Мы чтим священную память и не забываем подвиги не только солдат, но и тружеников тыла, которые не жалея сил и здоровья совершали трудовые подвиги ради Великой победы. Среди таких подвигов – строительство Сурского оборонительного рубежа. 2021 год объявлен годом памяти строительства Сурского и Казанского оборонительных рубежей. В этом строительстве принимали участие сотни тысяч человек. И сегодня мы будем говорить и вспоминать о том нелегком времени вместе с героями, нашими почетными гостями: участник ВОВ, радиоразведчик Саенко Анна Ивановна и ребенок войны, которой в те времена было столько же лет, как и вам сейчас, ребята - Иванова Антонина Павловна. А также посмотрим видеосюжеты – воспоминания самих участников строительства Сурского рубежа.

*Приглашаются ветераны.*

Предлагаем нашим гостям занять почетное место в нашем зале. **Саенко** Анна Ивановна 1923 года рождения, ветеран ВОВ. Службу проходила на Северо-Кавказском фронте в войсках МВД, в отдельном дивизионе спецслужбы «ОСНАС» радиоразведчиком с 1942 по 1945 год. Имеет награды: Медаль за боевые заслуги, Медаль за оборону Кавказа, Орден Отечественной войны. **Иванова** Антонина Павловна 1935 года рождения. В 1941 году ей было всего 6 лет. Когда началось строительство оборонительных рубежей она жила вместе со своим старшим братом, младшей сестренкой и мамой. Отец воевал на фронте.

Анна Ивановна, Антонина Павловна, ребята приготовили для вас вопросы и очень хотят, чтобы вы рассказали, как вы жили в годы войны. *Дети задают вопросы, гости на них отвечают.*

**Вопросы:**

1. Сколько вам было лет, когда началась война?

2. Как проходил ваш обычный день во время войны?
3. Кто из родителей или других родственников воевал, какие имеет награды?
4. Были ли у вас игрушки, ходили ли вы в детский сад?
5. Участвовали ли вы или кто-то из ваших родственников в строительстве оборонительного рубежа?
6. Какую технику использовали для строительства?
7. Чем кормили работников ?
8. Когда вы узнали о победе? Чем запомнился вам день победы?
9. Поделитесь, пожалуйста, своей послевоенной жизнью. Как вы жили после войны, с какими трудностями столкнулась ваша семья?

**Ведущий:**

На рытье окопов и траншей на территории республики поднялись более ста тысяч жителей. Почти все мужчины к тому времени ушли на фронт, так что «на окопы» отправляли всех, кто мог трудиться, – в основном это были, конечно, женщины, старики и даже дети. И хотя в документах значилось, что призыву подлежали люди не моложе 17 лет, на возраст работников никто не смотрел. Часто приболевших матерей, старших сестер и братьев подменяли дети помладше.

*Сценка детей «Письмо маме». Выходят дети в костюмах того времени, присаживаются на бревна, вокруг костра. Двое изображают рытье окопов, двое других – греются у костра, в уголке сидит еще один ребенок с угольком в руках и пишет письмо. Затем все меняются действиями. Дописанное письмо читают вслух.*

А теперь споем песню «Дети войны».

*Дети встают полукругом и исполняют песню.*

Сейчас от Сурского рубежа остались лишь холмы и овраги. Но рассказы самих участников, передаваемые из поколения в поколение, дошли и до наших дней. И нам нельзя забывать про их героический подвиг. Давайте посмотрим видеосюжет – воспоминания самих участников строительства Сурского рубежа. Сейчас им уже много лет, но они до сих пор вспоминают то время со слезами на глазах. *Включается видеоролик с рассказами участников строительства оборонительного рубежа.*

**Ведущий:**

Расцветают знамёнами маки
И не просто цветут, а горят!!!
Вспоминая былые атаки.
Воспевая погибших солдат…

Существовало поверье, что не просто так красные маки растут на полях сражений. Они символизируют кровь погибших солдат. Прекрасный танец с маками для вас, наши дорогие гости.

*Танец с маками*

**Ведущий:**

Враг не дошел, он западней разбит был,
Вдали от этих Сурских рубежей,
Враг не дошел, но все равно СПАСИБО!
Строителям безмолвных блиндажей.

Низкий поклон всем участникам строительства оборонительных рубежей, которые в 1941–1942 годы без выходных дней и в лютые морозы смогли соорудить Сурский и Казанский оборонительные рубежи.

**Приложение 2.3**

## Сурский оборонительный рубеж

*(Игра-квест по истории)*

Л. С. Семенова,
*учитель истории,*
*Цивильской средней*
*общеобразовательной школы № 2*

**Форма:** игра-квест.

**Цель:** формирование активной гражданской позиции, чувства патриотизма, национальной идентичности, мировоззренческих убеждений обучающихся на основе осмысления исторически сложившихся традиций, социальных установок, совершенствование умений и навыков систематизации и комплексного анализа исторической информации.

**Задачи:**

- активизация интереса обучающихся к истории России;
- систематизация знаний об истории Великой Отечественной войны 1941 – 1945 гг. и Сурского оборонительного рубежа;
- повышение мотивации к познавательной деятельности;
- формирование коммуникативной компетенции, умения работать в коллективе, команде;
- развитие интеллектуальных способностей и стимулирование творческой инициативы.

**Участники:** обучающиеся 7 – 11-х классов.

**Условия.** В игре участвуют две команды (количество членов команды – на усмотрение учителя). Необходимо пройти по станциям, выполнить задания за определенное время, набрав максимальное количество балов. В итоге ставится оценка «5» за первое место, «4» – за второе место (возможно награждение отличившихся). При оценке работы на станциях учитываются организованность и сплоченность команд. Побеждает команда, набравшая наибольшее количество баллов и выполнившая задания быстрее.

**Домашнее задание для команд:** придумать название и приветствие.

**Оборудование и раздаточные материалы:** мультимедийная доска; презентация по теме; маршрутные листы; бланки для станций; таблички с названиями станций.

### Ход игры - квеста

### I. Вступление.

Ведущий. 75 лет прошло с тех пор, как закончилась Великая Отечественная война. Но сколько бы не минуло лет, мы должны всегда помнить о тех страницах нашей истории. А чтобы помнить, надо знать. Советский народ мужественно выстоял в борьбе против фашистско-немецких захватчиков. В то время как солдаты сражались на фронте, на передовой, дети, женщины, старики работали в тылу, производя все необходимое для нужд армии. На случай проникновения врага вглубь страны возводились Казанский и Сурский рубежи обороны, или оборонительные рубежи. Сурский рубеж проходил в том числе и по

территории Чувашской Республики. И сегодня наша встреча будет посвящена событиям 75-летней давности, а именно, Сурскому оборонительному рубежу: незабытому подвигу наших земляков.

**II. Представление команд, условия прохождения квеста.**

Ведущий. 75 лет мы живем без войны и столько же лет мы многое знаем о ней, о сражениях, наступательных операциях. Подвиг наших предков жив, пока жива наша память об этом подвиге. Итак, ребята, я рада приветствовать вас на патриотической игре-квесте «Сурский рубеж». Хочу напомнить, что такое квест – это игровое приключение, во время которого вам нужно пройти череду препятствий для достижения цели. Сегодня у нас за звание победителя будут сражаться две команды. *(Названия команд, девизы...)*

Я прошу командиров получить маршрутные листы. Для вас, участники квеста, представлено четыре станции: «Смекалка», «Чтобы помнить, надо знать», «Ребус», «Герои нашего времени».

На каждой из них команду встречает руководитель станции. Он же дает задание и следит за его выполнением и временем. Команда получает один балл за каждый правильный ответ, руководитель пишет в маршрутном листе время выполнения и заработанное количество балов. После того как команда прошла все станции, она приносит свой маршрутный лист жюри для подведения итогов. Первая команда начинает движение с первой станции, вторая – со второй и далее по алгоритму.

Команды готовы. Пожелаем им успеха!

*(Пока команды выполняют задание, зрители и болельщики смотрят презентацию по истории Сурского оборонительного рубежа, заранее подготовленную группой учащихся.)*

**III. Выполнение заданий на станциях.**

**Станция «Смекалка».** *(Каждый правильный ответ – 1 балл.)*

1. Найдите закономерность в датах: осень 1941 года, январь 1942 года, 300 километров. *(Даты начала и завершения строительства Сурского рубежа и его протяженность.)*

2. Найдите закономерность в названиях: село Засурское, село Пандиково, Сурский Майдан, Алатырь. *(Основные точки – населенные пункты, вдоль которых проходил оборонительный рубеж по территории Чувашии.)*

3. Задание на общий кругозор. В период Великой Отечественной войны было написано много песен, поддерживающих дух солдат и тружеников тыла. Нужно назвать как можно больше песен военных лет. Каждая оценивается в один балл. *(«Священная война», «Темная ночь», «Что солдату нужно», «В землянке», «Два Максима», «Катюша», «Ехал я из Берлина» и др.)*

**Станция «Чтобы помнить, надо знать».** *(На знание исторических фактов по строительству Сурского оборонительного рубежа. Каждый правильный ответ – 1 балл.)*

1. Когда Государственный комитет обороны принимает решение по возведению оборонительных и стратегических рубежей на Волге? *(В конце октября 1941 года.)*

2. Какие категории населения в основном занимались строительством оборонительных рубежей? *(«Мобилизации подлежит население республики не моложе 17 лет, физически здоровых».)*

3. Сколько жителей Чувашии поднялись на строительство рубежа? *(Более ста тысяч человек.)*

4. Вдоль каких городов проходила линия обороны? *(Казань, Куйбышев (ныне Самара), Ульяновск.)*

5. Когда было закончено строительство основных укреплений? *(Январь 1942 года.)*

6. Назовите основные орудия труда, при помощи которых возводился Сурский оборонительный рубеж. *(Лопата и кирка.)*

7. Чего не хватало строителям рубежа суровой зимой 1941 – 1942 годов. *(Теплые вещи, рукавицы, обувь, питание.)*

8. Сколько всего позиций (огневых точек, блиндажей, укрепленных землянок с накатом и др.) было отстроено на Сурском оборонительном рубеже? *(Порядка 1480 землянок, 2347 огневых точек и пр.)*

9. В каком городе был создан музей-реконструкция «Зима 1941 года: невидимый подвиг в тылу»? *(В городе Шумерля.)*

10. По предложению Главы Чувашии 2021 год в республике объявлен годом..? *(Годом трудового подвига строителей Сурского и Казанского оборонительных рубежей.)*

**Станция «Ребус».** *(Каждый правильный ответ – 1 балл.)*

1. Ваша задача – из двух предложенных слов составить слово по тематике, связанной с возведением Сурского оборонительного рубежа. При этом нужно обязательно использовать все буквы (пример: РИНГ + ЗОНА = ГАРНИЗОН).

ДАЖБ-ЛИН = БЛИНДАЖ

ЛЯНКА-ЗЕМ = ЗЕМЛЯНКА

ЖУЙКА-БУР = БУРЖУЙКА

ЕРЛЯ-ШУМ= ШУМЕРЛЯ

ТЫРЬ-АЛА = АЛАТЫРЬ

2. Задание на развитие общего кругозора. Назовите известные вам боевые машины Великой Отечественной войны.

Ползёт черепаха – стальная рубаха; враг – в овраг, черепаха – куда враг. *(Танк.)*

Не пчела, не шмель, а жужжит; неподвижно крыло, а летит. *(Самолёт.)*

Красная девица – гроза для немцев; стоит запеть, как немцу верная смерть. *(«Катюша». Её официальное название – боевая машина реактивной артиллерии.)*

3. Назовите самый известный танк Великой Отечественной войны. *(«Т-34».)*

**Станция «Герои нашего времени».** *(Каждый правильный ответ – 1 балл.)*

1. По инициативе Совета ветеранов войны и труда Порецкого района и Порецкого отделения ветеранов Великой Отечественной войны и военной службы 9 мая 2015 года в селе Порецкое был открыт памятный знак-обелиск строителям Сурского рубежа обороны. Назовите автора эскизного проекта. *(Заслуженный художник Чувашии А. В. Ильин.)*

2. 21 января 1942 года на имя наркома внутренних дел была послана телеграмма, подписанная начальником 12 Армейского управления Леонюком, председателем Совнаркома Сомовым, секретарем обкома Чарыковым: «Задание ГКО по строительству Сурского оборонительного рубежа выполнено». Назовите имя наркому, к которому была обращена данная телеграмма. *(Л. П. Берия.)*

3. Какому предприятию было дано задание изготовить 500 штук железобетонных колпаков для пулеметных дзотов, топорищ, черенков к лопатам, деревянных ложек, мисок, лаптей, рукавиц? *(Чувашстройтресту.)*

4. Кому в срок до 15 ноября 1941 года было поручено выявить все имеющиеся резервы металла, цемента и камня, а также «организовать производство железобетонных, пулеметных колпаков и изготовление скоб и поков для ДЗОТ на предприятиях Чувашской

АССР». *(Председателю Госплана Чувашии, секретарю ОК КПСС по промышленности и транспорту.)*

5. Герой строительства Сурского оборонительного рубежа, 1906 года рождения, бригадир землекопов (Алатырский район). «На строительстве работал с первых дней и до конца завершения работ. Лучший бригадир, организатор стахановского труда. Члены его бригады систематически выполняли норму выработки на 200 %». *(Безбородов Михаил Иванович.)*

**Маршрутный лист команды.**

| **Станция** | **Количество баллов** |
|---|---|
| **Станция 1**<br>«Смекалка» | |
| **Станция 2**<br>«Чтобы помнить, надо знать» | |
| **Станция 3**<br>«Ребус» | |
| **Станция 4**<br>«Герои нашего времени» | |

**IV. Подведение итогов.**

Вдущий. Капитаны сдают маршрутные листы организатору. Пока организаторы суммируют балы, высчитывают время и определяют победителей, ребята могут просмотреть документальный фильм о Великой отечественной войне.

Сло во жюри. Закончилось ваше путешествие. Сегодня в квесте победу одержала команда... *(Команды получают грамоты, особо отличившиеся участники – подарки.)*

Ведущий. Сегодняшнее мероприятие еще раз напомнило нам о событиях, которые мы не можем и не должны забывать. Память о героях тех лет должна жить в нас вечно. Мы обязаны свято хранить благодарную память о тех, кто защищал Родину, кто отдал за нее жизнь. А чтобы помнить, нужно знать и изучать историю и нашей малой родины – Чувашии, и России в целом.

**Приложение 2.4.**

## Вăрçăпа тыл ĕç паттăрĕсене чыс та мухтав!

*(Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинчи тата Хусанпа Сăр тăрăхĕсенчи рубежсене тунă тылри халăхăн паттăрлăхне халалланă 5-11-мĕш класри ачасемпе çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче иттермелли мероприяти сценарийĕ)*

***Сценари авторĕсем:***
*Г. А.Федорова,*
*Чăваш Республикин Канаш районĕнчи*
*Сухайкасси пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулĕнче тăван ен культури вĕрентекен;*
*В. М. Иванова,*
*Чăваш Республикин Канаш районĕнчи*

*Сухайкасси пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкулӗнче чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекен.*

**Тӗллевӗсем:** Вӑрҫӑ хирӗнче, тылра ҫӗнтерӗве ҫывхартма пулӑшнӑ ентешсен паттӑрлӑхне чысласси; ачасен паттӑрлӑх туйӑмне аталантарасси; вӑрҫӑ ҫинчен ҫырнӑ хайлавсемпе паллаштарасси; вӗренекенсене тавракурӑмне анлӑлатасси.

**Кирлӗ хатӗрсем:** компьютер (ноутбук), проектор, музыка центрӗ, вӑрҫӑ ҫинчен хывнӑ юрӑсем, фон вырӑнне усӑ курмалли юрӑ-кӗвӗ, 1940-мӗш ҫулсенчи тум-тир, салтаксен форми, кутамкка, виҫ кӗтеслӗ ҫырусем, краҫҫын лампи, репродуктор тата ытти те.

**Ӗҫ мелӗ**: каласа пынӑ май проекторпа вӑрҫӑ саманчӗсене кӑтартса пырасси.

Композиципе литературӑпа драма кружокне ҫӳрекенсем усӑ курма пултараҫҫӗ. Ӑна акт залӗнче е ялти клуб, шкул сцени ҫинче лартсан вырӑнлӑрах.

***Класс тулашӗнчи ӗҫ юхӑмӗ***

***Зала вӑрҫӑ паттӑрӗсене тата Хусанпа Сӑр юхан шывӗ хӗрринче хӳтӗлев рубежӗ тунӑ ҫӗре хастар хутшӑннӑ ентешсене халалланӑ стена хаҫачӗсемпе илемлетмелле.***

*Чаршав хупӑ. Ҫутӑ сӳннӗ. Шӑплӑх. В. Свиридовӑн «Вӑхӑт малалла» хайлавӗн фонограмми янӑраса каять. Сцена ҫине ҫутӑ яраҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтра ачасен ташӑ ушкӑнӗ сцена ҫине тухать, ушкӑнри пӗр хӗр ачапа арҫын ача аллинче пысӑк глобус. Ташӑ композицийӗ. Сценӑн хыҫалти пайӗнче пӗчӗк хунарсенчен ҫутӑ каять, вӗсем вылянтарса ҫӑлтӑрсем евӗр ҫутатаҫҫӗ. Ташӑ вӗҫленнӗ май глобуса ик енчен тытнӑ хӗр ачапа арҫын ача сценӑн мал енне куҫса В. Давыдов-Анатрин «Ҫӗр-планета чӗнет» сӑввин ҫаврисене вулаҫҫӗ.*

**Арҫын ача:** Ҫӗр-планета чӗнет пурнӑҫа юратма,
Тӗнчепе, пур йышпа ҫирӗп миршӗн тӑма,
Ҫӗр-планета чӗнет!
**Хӗр ача:** Ҫӗр-планета чӗнет пӗр-пӗрне ал пама,
Халӑхсем хушшинчи туслӑха упрама
Ҫӗр-планета чӗнет!

*Сцена ҫине ертсе пыракансем тухаҫҫӗ. Вӗсен хыҫӗнче сӑвӑ вулакансем савӑл евӗр тӑраҫҫӗ.*

**1-мӗш ертсе пыракан:** Ырӑ кун пултӑр, хисеплӗ хӑнасем!

**2-мӗш ертсе пыракан:** Ырӑ кун пултӑр, ентешӗмӗрсем!

**1-мӗш ертсе пыракан:** Ҫапла, кашни ҫын ҫӗр ҫине ҫут тӗнчепе киленсе пурнӑҫа юратма ҫуралать, ҫутӑ малашлӑха ӑнтӑлать, ҫӗр аннемӗре хисеплесе мирлӗ ӗҫпе ҫӗнӗ кунӑн илемне савать. Пирӗн мӑн кукаҫи-кукамайсем те, мӑн асаттесемпе-асаннесем те ҫутӑ ӗмӗтсемпе пурӑннӑ.

**2-мӗш ертсе пыракан:** Анчах вӑрҫӑ… 1941 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн 22-мӗшӗнче пирӗн ҫӗр-шыв ҫине фашистла Германи вӑрӑ-хурахла тапӑннӑ, тискер, ылханлӑ вӑрҫа пула мӗн чухлӗ ҫыннӑн ырӑ та ҫутӑ ӗмӗчӗ-тӗллевӗ пурнӑҫланайман, мӗн чухлӗ пурнӑҫ вӑхӑтсӑр татӑлнӑ!

**Сӑвӑ вулакансем:** *(ачасем черетпе Муркаш районӗнчи Л.И.Сергеева вӗрентекен ҫырнӑ сӑввӑн йӗркисене калаҫҫӗ):*

Ҫӗртме. Хӗрӗх пӗрремӗш ҫул…
Тин ҫутӑлма пуҫланӑ тул.
Кас-кассӑн шӑпчӑк сас парать,
Шевле сапса хӗвел тухать –
Ирӗ илемлӗ туйӑнать.

Анчах ҫак ҫутӑ ирхине
Хура тӗспе асра юлать:
Пирӗн Тӑван ҫӗр-шыв ҫине
Фашист эшкерӗ тапӑнать –

Ылханлă вăрçă пуçланать.

Кашни ялтан та хуларан,
Çĕр-шыв аннемĕр ыйтнăран,
Вăрçа каяççĕ çамрăксем,
Çулланнă вăй питти арсем,
Хăйсен ирĕкĕпех – хĕрсем…

*Сăввăн юлашки йĕркисене вуланă май сцена çине юр-вар хунă сĕтел тухса лартаççĕ, хĕрарăмпа арçын, пĕчĕк ача курăнаççĕ. (Арамĕ упăшкине вăрçа ăсатма кутамкка хатĕрлет. Пĕр çавра çăкăр чикет тата ытти те. Тулта салтак юрри илтĕнет. Упашки пĕчĕк ачине йăтса илсе чуп тăвать. Алăк патне çитсен кутамккине салтса çур çăкăрне касса парса хăварать.*

**Упăшка:**

Сывă пул, тăван кил, сывă пул,
Яш çăкаллă урам, ĕмĕрех ешĕл юл.

*Ача чупса пырса ашшĕне уринчен çавăрса ыталаса тытать, арăмĕ йĕрсе ачине çĕклет, ашшĕ ачине пуçран ачашласа илет.*

**Упăшка (ачине):**

Пул хăюллă, тӳрĕ чунлă, аннӳне итле.

**Упăшка (арăмне):**

Кĕт мана, эп таврăнатăп
Питĕ хыт кĕтсем.
Кĕт мана, эп таврăнатăп
Вилĕме çĕнсе.

*Тухса каять. «Сăваплă вăрçă» («Священная война») юрă фонограмми янăраса каять.*

**1-мĕш ертсе пыракан:** Республика аталанма кăна пуçланă,
Киревсĕр вăрçă хупăрларĕ тĕнчене.
Пур халăх харăс чăмăртаннă
Пӳлсе лартас тесе тăшман çулне.

**2-мĕш ертсе пыракан:** Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи малтанхи кунран пуçласах пĕтĕм халăх вăрçи пулса тăнă. «Тăван çĕр-шыв хăрушлăхра!», Пĕтĕмпех фронт валли, пĕтĕмпех çĕнтерӳ валли!», «Пĕтĕм вăя тăшмана аркатма!» – çак лозунгсем çынсене ура çине тăратнă, ялав вырăнне пулнă.

*«Тӳпери пĕлĕт» («Облако по небу») юрă янăрать, экран çинче Сăр рубежне сăнлакан кадрсем (ӳкерчĕксемпе схемăсем) тухаççĕ.*

**1-мĕш ертсе пыракан:** 1941 çулхи октябрь уйăхĕнче тăшман Мускав патне çывхарнă. Нимĕç фашисчĕсем Тăван çĕр-шывăмăрăн тĕп хулине пăхăнтарма, Атăл тăрăх Астраханьрен Хусана çити, унтан Çурçĕрелле, Котлас тата Архангельска, çитме палăртнă. Çак лини Чăваш Республики урлă выртмалла пулнă. Совет çыннине ыран мĕн кĕтнине никам та пĕлмен. Мускав хӳтĕленме хатĕрленнĕ. Октябрĕн 8-мĕшĕнче Г. Жуков И. Сталина хăрушлăх пирки, нимĕçсемшĕн Мускав патне мĕнпур çул тенĕ пекех уçă пулни çинчен пĕлтернĕ. Патшалăх Хӳтĕлев комитечĕ çийĕнчех Ока, Дон, Атăл юхан шывĕсен çывăхĕнчи хӳтĕлев тата стратеги рубежĕсен планне йышăннă.

**2-мĕш ертсе пыракан:** Çапла майпа ытларах Горькие /хальхи Чулхула/, Куйбышева /хальхи Самара/, Чĕмпĕре, Саратова, Сталинграда /хальхи Волгоград/ тата ытти хулана хӳтĕлеме тĕллев лартнă. Пĕтĕмпе 10 пин çухрăм хӳтĕлев рубежĕ, 70 пин дзот, 27 пин çĕрпӳрт тумалла пулнă.

**1-мĕш ертсе пыракан:** 1941 çулхи октябрĕн 13-мĕшĕнче Хӳтĕлев комиссийĕн патшалăх комитечĕ Сăр тата Хусан хӳтĕлев рубежĕсем тăвас тесе йышăннă. Тĕп тĕллев –

Хусанта вырнаҫнӑ Тӑван ҫӗр-шывшӑн чи пӗлтерӗшлӗ промышленность объекчӗсене хӳтӗлесе тӑшман ҫулне пӳлесси.

**2-мӗш ертсе пыракан:** Ҫак трассӑна Мари, Чӑваш тата Тутар республикисем урлӑ тума палӑртнӑ. Сӑр рубежӗн ҫул-йӗрне Етӗрне районӗнчен пуҫласа Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Паньтӑк ялӗ ҫумӗпе иртсе Ҫӗмӗрле, Пӑрачкав районӗсем, Улатӑр районӗнчи Сурский Майдан сали ҫумӗпе Чӑваш ен чикки таранах хывма палӑртнӑ.

**1-мӗш ертсе пыракан:** Хусан рубежне Вӑрмар районӗнчи Ёсмел (Октябрьски), Энӗшпуҫ (Шоркистры) тата Арапуҫ (Арабоси) салисем витӗр Тӑвай районӗнчи Тӑвай тата Мучар (Можарки) салисем ҫумӗпе Тутар Ресбуликин чикки таран хывмалла пулнӑ. Пӗтӗмӗшле Чӑваш ҫӗр-шывӗ урлӑ выртакан хӳтӗлев рубежне 380 километр тӑршшӗ тума йышӑннӑ. Малтанах пур ӗҫе те 1941 ҫулхи раштавӑн 10-мӗш тӗлне вӗҫлеме палӑртнӑ.

**2-мӗш ертсе пыракан:** Йышӑнупа килӗшӳллӗн хӳтӗлев рубежӗсене тума 17 ҫултан аслӑраххисене, сыввисене илсе кайнӑ, анчах ҫав йыша ҫул ҫитмен ҫамрӑксем те лекнӗ. Акӑ, тӗслӗхрен, 16 ҫулта пулас чӑваш драматургӗ Н. Н. Терентьев та Канаш районӗнчи Кӑшнаруй ҫыннисемпе пӗрле Тӑвай районӗн Ҫӑлпуҫ ялӗ ҫывӑхӗнче уйӑх ӗҫлени паллӑ. Хӳтӗлев рубежӗсене тӑвас ӗҫе пӗтӗмӗшле 200 пине яхӑн ҫын хутшӑннӑ.

**Сӑвӑ вулакансем** *(Иванова В.М. сӑвви)***:**

Тӑшман ытла хаяр та сӗмсӗр,
Эшкерӗ Мускава ав талпӑнать.
Вилӗм ҫави тата ним шелсӗр
Паттӑрсене ҫулать-ҫулать…

Тылри чӑваш ним тӑхтамасӑр
Алла часрах к(ӗ)реҫе тытать.
Кунне-ҫӗрне те уямасӑр
Сӑр рубежне куллен хывать.

Кӗр-хӗл сивви ним хӗрхенмесӗр
Нимӗҫсене те ӑшалать.
Чӑваш ҫынни ӑна пӑхмасӑр
Шӑннӑ ҫӗре катать, чавать.

*Сцена ҫине ҫутӑ ӳраҫҫӗ. Унта фуфайка, алса, кӑҫатӑ тӑхӑннӑ, аллисене кӗреҫе, пӑчкӑ, наҫилкка тытнӑ ҫынсем тухаҫҫӗ, ҫурма ҫавра туса кӑвайт тавра ларса вырнаҫаҫҫӗ. Аллисене ӑшӑтнӑ май калаҫу пуҫарса яраҫҫӗ. Экран ҫине Сӑр рубежне ҫутатакан ҫӗнӗ слайдсем тухаҫҫӗ.*

*Сценӑн малти пайне хӗр тухать, шӑнса кӳтнӗ аллине ӑшӑтса кӑранташа сурчӑкӗпе йӗпете-йӗпете, ҫыру ҫырать.*

**Хӗр:** Аннеҫӗм, эпир кунта иртен пуҫласа каҫчен кану кунӗсемсӗр ӗҫлетпӗр. Йывӑр, анчах аттепе пиччесене вӑрҫӑра тата йывӑртарах пулни ҫинчен шухӑшлатӑп та шӑла ҫыртса ӗҫлетӗп. Ҫанталӑкӗ тата кӑҫал ытла сивӗ-ҫке. Анне, тархасшӑн аялти тум-тир, ҫӑкӑр, ҫӗр улми парса ярсам. Эпӗ питӗ вӑйран каятӑп, кунта кашни кун тенӗ пекех ҫынсем вилеҫҫӗ. Тен, эпӗ те киле тавранаймаймӑп.

*Сасӑ вӑйсӑрланса пырать. Пӗр хӗрарӑм ун патне пырать, чей курки тӑсать.*

**Хӗрарӑм:** Хӗрӗм, ҫав тери ан хуҫӑл-ха. Акӑ вӗри чей ӗҫ, ӑшӑнӑн. Ӑҫтан пулатӑн эсӗ?

**Хӗр:** Канашсем эпӗ. Пире ялтан 15 ҫынна эрне каялла Сӑр тӑрӑхне окоп чавма ячӗҫ: ултӑ хӗр, 16 ҫулхи арҫын ача тата 2 хӗрарӑмпа 2 ватӑ арҫын. Пурне те пӗр хваттере ячӗҫ. Кил хуҫи кашни кунах пире вӗри яшка пӗҫерсе ҫитерет. Яшкинче шыв, ҫӗр улмипе сухан ҫеҫ пулин те ӗҫ хыҫҫӑн ҫав тери тутлӑ пек туйӑнать.

**Хӗрарӑм:** Ҫапла. Эпӗ вара Йӗпреҫ тӑрӑхӗнчен, эпир кунта пӗр ялтан вун иккӗн. Йӗре-йӗре килтӗмӗр. Килте пӗчӗк ывӑлпа ват анне юлчӗҫ. Мӗн кӗтет пире? Хӑрататчӗ. Уйӑха яхӑн ӗнтӗ вӑрман касатпӑр, окопсем чаватпӑр, блиндажсем тӑватпӑр.

**Хĕр:** Мĕнле чăтатăр? Ман алăсем йăлт хăмпăланса ларнă? Шăннă çĕре кăвайт чĕртсе ăшăтмасăр та чавма çук.

**Хĕрарăм:** Ах, хĕрĕм, тăшман ытла хаяр-çке. Çак Сăр тăрăхĕнчи рубеж питĕ пĕлтерĕшлĕ иккен. Чăтмалла, чăтмалла…

*Тĕттĕмленет. Кăвайт тавра ларакансем кĕрсе каяççĕ, вĕсене хирĕç ĕç тумĕ тăхăннă виçĕ хĕрарăм тухать, сăн-пичĕсем салхуллă, шухăшлă. Вĕсем аса илӳсен ярăмĕпе паллаштараççĕ. Экран çинче Сăр рубежне тунине кăтартакан слайдсем, çак ĕçе хутшăннă паттăр ентешсен сăн ӳкерчĕкĕсем тухаççĕ.*

**1-мĕш хĕрарăм:** Пите тăм тиветчĕ, алă шăнса кӳтетчĕ. Тăпра хытă шăннăран кашни сантиметрне лумпа пĕтĕм вăйран таккаттăмăр, кĕреçепе ывăтаттăмăр. 1,5 тарăнăш чавмаллаччĕ. Урара – çăпата. Çĕр пӳрте таврăнсан ăна пӳлĕм варринчи çаврака кăмака тавра хурса типĕтеттĕмĕр. Ăшă тумланайман ун чухне, çири кĕпе-йĕм кивĕччĕ.

**2-мĕш хĕрарăм:** Вăл хĕл юр нумай çуманччĕ, сивĕ самаях шăтăртатрĕ. Ĕç вырăнне лашапа илсе каятчĕç. Пĕррехинче ларса пынă чухне сисмен те – пите тăм тивнĕ. Шап-шурă вырăна юрпа сăтăркаласа ăшăтрăм. Çăпатапа ура та шăнатчĕ. 40 градус сивĕре сăхман та витĕр яратчĕ. Хăшĕ-пĕри ăшăнас тесе кăвар çинче тăпăртататчĕ.

**3-мĕш хĕрарăм:** Танксем ан хăпарччăр тесе сăрта чăнкăлатса 3 метр çӳллĕш чаваттăмăр. Канмалли кун пулман пирĕн. Çил-тăман алхасать-и, пите сивĕ чĕпĕтет-и – кĕреçе йăтса ĕçлеме кайнă. Шăннă çĕре лумпа та, кувалдăпа та катнă. Аялтан тухакан ăшă тăпра урана кăштах ăшăтатчĕ. Ĕçленĕ çĕрте лашасем вилни пирки те илтнĕччĕ. Ахаль пĕр кун та ларман.

**1-мĕш ертсе пыракан:** «Вĕсем окоп чавнă», – тесе калама çăмăл. Анчах ку ĕç мĕн тери йывăр пулнине çавна чăтса ирттернисем çеç лайăх пĕлеççĕ. Пĕве кĕнĕ хĕрсен, çул çитмен яшсен алла кĕреçе, лум тытса окоп чавма тивнĕ. Çĕр хытă шăннă, лумпа аран каталнă. Черчен хĕрсем теме пулман вĕсене – арçын пекех вăйлă ĕçленĕ.

Сăр хĕрринче ырми-канми ĕçленĕ –
Мĕн чухлĕ чавнă пулĕ окопсем.
Ăшă тум-тир фронта валли тиенĕ,
Кунта кил тупнă аякри çынсем.

**2-мĕш ертсе пыракан:**
Лăш курмасăр кунĕпе те çĕрĕпе,
Хусанпа Сăр юхан шывĕ çумĕпе,
Шартлама сивве пăхмасăр кар тăрса,
Хӳтĕлев рубежĕ тунă шăл çыртса!

**1-мĕш ертсе пыракан:** Чăваш Республикинче хӳтĕлев рубежне тăвакан ултă çарпа уй-хир строительствин ушкăнне йĕркеленĕ, вĕсем пĕр-пĕринпе тупăшса вăй хунă, ĕçре чăн-чăн паттăрлăх кăтартнă. Сăр тăрăхĕнчи ĕçсене 1942 çулхи кăрлачăн 20-мĕшĕнче, Хусан енчи линие кăрлачăн 25-мĕшĕнче вĕçленĕ.

**2-мĕш ертсе пыракан:** Шел те, çак йывăр ĕçе кӳлĕннĕ çынсем пирĕн республикăра нумайăн юлман. Ватăлаççĕ ветерансем, вăрçă ачисем, тылри ĕç паттăрĕсем. Апла пулин те ун чухне окоп чавнă хĕрсем, халĕ 90-ран иртнĕ ватăсем, çав вăхăта манаймаççĕ. Çанталăк та хирĕç тăнă тейĕн: 1941–1942 çулсенчи хĕл ытти чухнехинчен сивĕ килнĕ, урамра 40 градуса та çитнĕ. Пурпĕрех ĕçленĕ вĕсем, найкăшакан пулман. Фронтпа тыл пĕрлĕхĕ çĕнтерӳ çăл куçĕ пулнине лайăх ăнланнă.

**Сăвă вулакансем сцена çине тухаççĕ:**
Сухине те турăн, акрăн, выртăн—
Пĕтĕмпех ăсатрăн фронт валли.
Кĕркунне алсиш-чăлха та çыхрăн,
Шăнасран салтак ури-алли.

Йывăр пулчĕ. Мĕн кăна тӳсмерĕн,
Пурпĕр çӳремерĕн çемçелсе.
Çĕнтерӳшĕн ним те хĕрхенмерĕн,
Çĕнтерсен йăлтах пулать тесе.

**1-мĕш ертсе пыракан:** Мускавшăн пынă çапăçу 1941 çулхи авăн уйăхĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа 1942 çулхи ака уйăхĕччен тăсăлнă, нимĕç фашисчĕсен çарĕ пĕрремĕш пысăк çухату тӳснĕ, çакă гитлеровецсен çак çулах СССРа аркатас ĕмĕтне аркатнă. 1942 çулта пирĕн çарсем Сталинград çывăхĕнче нимĕçсен çарне чарнă. Тăшман совет халăхĕн парăнманлăхне туйса илнĕ. Анчах вăрçă тата виçĕ çул алхаснă.

**2-мĕш ертсе пыракан:** Вăрçă вăхăтĕнче кашни килех тенĕ пек салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем кăна мар, хурлăхлă çырусем те килсех тăнă. Чăваш Республикинчен вăрçа 208229 ентеш тухса кайнă, 106470 çын таврăнайман.

*Сцена çине хĕрсемпе хĕрарăмсем, почтальон тухаççĕ. Почтальон çырусем валеçет. Сайра кама савăнăçлă çыру парать, ытларах хурлăхлă хыпар пĕлтерекен çырусем лекеççĕ. Тăванĕсене çухатнăскерсем йĕреççĕ. «Вдовы России» юрă янăранă май çак хĕрарăмсем сăвă калаççĕ.*

**1-мĕш хĕрарăм:**
Çук, нихăçан, ĕмĕрне те
Ĕненмĕп эп, ывăлăм,
Эсĕ çичĕ ютра
Ик куçна хупнине.
Çырăвне комиссар
Йăнăшпа кăна çырнă вăл,
Эп пĕлеп вăрçăра
Ун пекки пулнине.

**2-мĕш хĕрарăм:**
Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ…
Çухалмашкăн савнă-им çĕре?
Çухалмашкăн тапнă-им чĕре?
Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ…

**3-мĕш хĕрарăм:**
Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ…
Çуралман хыпарсăр çухалма,
Юн тăкман хыпарсăр çĕр пулма
Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ…

*Çав вăхăтра сцена çине хура, хĕрлĕ хăю тытнă ташă ушкăнĕ тухать, «Вут-çулăм ташши» ташлать. Экран çинче – вăрçăри кадрсем.*

**Сцена хыçĕнче 1-мĕш ертсе пыракан (***Муркаш районĕнчи Л.И. Сергеева вĕрентекен сăввин йĕркисене калаççĕ)***:**
Хăрушă пулнă çав кунсем:
Кĕрслетнĕ мина-снарядсем.
Çĕр ваннă хурçă танксемпе,
Тӳпе тулнă йӳç тĕтĕмпе,
Çынсем вилнĕ мĕльюнĕпе.

**Сцена хыçĕнче 2-мĕш ертсе пыракан:**
Çапла тăвата çул хушши
(Епле чăтса ирттернĕ-ши?!)
Тăшман лăсканă çĕр-шыва.
Пирĕн – çĕнтернĕ çав-çавах!
Паттăрсене – чыс та мухтав!

*Çутă сӳнет. Ташлакансем сцена çинчех выртаççĕ. Джеймс Ластăн «Пĕччен кĕтӳçĕ» кĕвви янăраса каять. Пирĕштисем тухса «Вут-çулăм ташши» ташлакансем тавра хурлăхлăн явăнаççĕ те ларса йĕреççĕ. Хура тумлă ВИЛĔМ тухать, çутă пайăрки ун çине ӳкет. Вăл ерипен сцена çинче выртакансем хушшипе çӳрет. А. Розенбаумăн «Пурнăç çулĕ» фонограммине ямалла.*

**Вилĕм:** Хăрушă, хăрушă…Эп вĕсене вилĕм сунман, хам çавана та туптаман. Вăхăтсăр вилнĕ паттăрсем, çут пурнăçа сыхлакансем.

Мĕн чухлĕ çухату эп куртăм?
Сире ыйтсах калатăп – Вилĕм,
Асра чĕрĕ юлччăр вĕсем,
Çĕр-шывшăн пуçа хунисем.
Эп – Вилĕм, чунсене илсе кайăп,
Хăварăп Астăвăм та вил тăприсем.
Хурлăха тăрнасенче хăварăп,
Вĕсенче пулĕç паттăрсен чунĕсем!

*Çутă ерипен сӳнет. Вăл тепре çутăлнă çĕре пурте сцена умне тухса тăнă. «Тăрнасем» (Р.Гамзатов, Я.Френкель) юррăн кĕвви ерипен илтĕнет.*

**1-мĕш ертсе пыракан:** Хуркайăксем, картан-картан
Хуллен-хуллен эсир иртетĕр.
Ĕшеннĕ-мĕн çунатăрсем.
Чуна татса çӳлте йĕретĕр
Эсир, мăнтарăн тăрнасем!
*Аркадий Лукин*

*Çав вăхăтра сӳнми кăвайт çутăлса каять. Арçын ачапа хĕр ача кăвайтăн икĕ енне тăрса сăвă вулаççĕ.*

**1 ача:** Пуçа тайса çапла калатпăр:
– Вилсе – вилĕме парăнтарнă
Пире ыр пуласлăх сунса.

**2 ача:** Кашнин ячĕ халь пархатарлăн
Çиçет, çутă çăлтăр пулса.

**1-мĕш ертсе пыракан:** Пайтах ĕмĕр иртĕ, анчах 1418 куна пынă вăрçăра халăх тĕлĕнмелле патгăрлăх кăтартнине, Аслă Çĕнтерӳшĕн çĕрне-кунне пăхмасăр ĕçленине тĕнче историйĕ манса кайма пултараймĕ. Чăвашран 54 пин салтак орден-медаль илме, вĕсенчен 65 Совет Союзĕн Геройĕ ята тивĕçнĕ. Тылра вăй хурса фронта пулăшнăшăн 120 пин çынна «Хастар ĕçленĕшĕн» медальпе чысланă. Тăшман Сăр тата Хусан тăрăхĕнчи рубежсем патне çитеймен, анчах вĕсене мĕн вăрçă пĕтичченех сыхласа, çирĕплетсе тăнă.

**1 ача:** Тăратпăр сӳнми кăвайт умĕнче,
Паян кунта пуçтарăннă тĕнче.
Саламлама мухтавлă çынсене,
Раççейшĕн çапăçнă салтаксене.

**2 ача:** Çак паттăрсем çĕнтернĕ тăшмана
Питех тискер çав пулнă самана.
Темле пулсан та чăтнă салтаксем
Чунне парса ĕçленĕ тылрисем.

**1 ача:** Сăр рубежне çĕкленĕ чăвашсем,
Хусан енне те чавнă окопсем,
Ик уйăх Хӳтĕлев хăпартнă,
Ĕçре чăн паттăрлăх кăтартнă!

**2-мĕш ертсе пыракан:** Манăçмаççĕ вăрçă кунĕсем, çухалмаççĕ паттăрсен ячĕсем. Пирĕн халăх вĕсене ялан асра тытать. Чыс та мухтав вĕсене!

Шăплăх минучĕ,
Шăплăх минучĕ…
Паттăрсене асăнатпăр паян
Шăплăх минучĕ,
Шăплăх минучĕ –
Вăрçă шавне вăл хуплатăр ялан!

Халĕ вăрçăра пуç хунă ентешĕмĕрсене, тыл паттарĕсене асăнса пĕр минут шăп тăрăпăр.

*(«На безымянной высоте» юрă янăрать.)*

**1-мĕш ертсе пыракан:**
Юнлă вăрçă каймасть асăмран ĕмĕрне.
Вăл хăварчĕ суран кашни çын чĕринче.
Эп таятăп пуçа вилнисен умĕнче:
Пултăр Мир ĕмĕрех Çĕр планета çинче!
*В.Давыдов-Анатри*

**2-мĕш ертсе пыракан**
Шавлă аслати кисретнĕ чух çĕре
Эп вуларăм çиçĕм çырăвне.
Асăрхаттарать-мĕн çав çыру пире:
Упрама хушать çĕр илемне.
Сӳнес çук тĕнче, хĕвел, сенкер тӳпе!
Пĕлĕте пăхса итле, ватти-вĕтти:
«Вăрçă кирлĕ мар!» - тесе, çут çиçĕмпе
Вăйлăн ал пусать, ав, аслати.
*Алексей Афанасьев*

**1-мĕш ертсе пыракан:** Тăвата çул хушшинче 27 миллион ытла совет çыннин кун-çулне татрĕ нимĕç фашисчĕ. Мĕн тери пысăк çухату!. Мĕн чухлĕ çынна сусăрлатса-амантса хăварчĕ çак ылханлă вăрçă. Кĕтнĕ 1945 çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕ – Çĕнтерӳ кунĕ – историе ĕмĕрлĕхех савăнăçпа куççульлĕ астăвăм кунĕ пулса кĕчĕ.

*Пурте сцена çине тухаççĕ, «Çĕнтерӳ кунĕ» юрра чăвашла янăраттараççĕ. Экран çинче Çĕнтерӳ салючĕ.*

**Çĕнтерӳ кунĕ**
*Куçаруçисем: Енейкина Г. Л., Енейкин А. Н.*
Çĕнтерӳ, эс аякраччĕ шав пиртен,
Шĕл кавар пек хĕмленеттĕн инçетрен.
Çулăмпа та, тусанпа та ăнтăхса,
Çак куна çывхартнă тар тăкса.

*Хушса юрламалли:*
Ку Çĕнтерӳ кунĕ, кĕл шăршиллĕскер.
Уяв кунĕ, кăвакарнă çӳçлĕскер.
Пысăк савнăç, йăлтăрти куççульлĕскер.
Çĕнтерӳ ку! Çĕнтерӳ ку! Çĕнтерӳ ку!

Çĕрĕн-кунĕн куç хупмасăр талпăнса
Тимĕре шăратнă халăх кар тăрса.
Ирĕн-каçăн тăшмана çапса-ватса
Çак куна эпир çывхартнă юн тăкса.

Ах, аннеçĕм, юлташсем халь çук манпа,

Çаруран чупса килесчĕ сывлăмпа.
Çур Европа çулăмра утса-чупса
Çак куна эпир çывхартнă шăл çыртса.

***Усă курнă литература***

1. Григорьев, Н. Сурско-Казанский оборонительный рубеж: (Оборонительные рубежи в тылу) / Н. Григорьев // Народная школа, 2005. – №2. – С. 35–36.
2. Салтак тетрачĕ // Тантăш кĕнеки. – 2(4) №. –Шупашкар, –1995, ака,15.
3. 1418 кун: цифрăсемпе фактсем // Тантăш. – 1995 –13 №. – 11 с.
4. Сергеева, Л. И. Асăмран тухмаççĕ çав кунсем / Л. И. Сергеева // Халăх шкулĕ. – 2010. – 5 № –38 с.
5. А. Афанасьев, В. Давыдов-Анатри, А. Лукин сăвăçсен тата В.М. Иванова (Канаш районĕнчи Сухайкасси тĕп шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕн) сăввисем.

**Приложение 2. 5**

## Урок теми: Чăваш Республикинче Сăр тата Хусан хӳтлĕх чиккисене тăвакансен ĕç паттăрлăхĕ

Иванова Надежда Григорьевна,
Чăваш Республикин вĕренӳ институтĕн доценчĕ;
Албутова Надежда Михайловна,
Чăваш Республики, Çĕмĕрле районĕ,
Якуртушкăнь вăтам шкулĕн вĕрентекенĕ;
Ишова Альбина Валентиновна,
Чăваш Республики, Шупашкар районĕ,
Тутаркасси вăтам шкулĕн вĕрентекенĕ;
Школьникова Луиза Николаевна,
Чăваш Республики, Йĕпреç районĕ,
Эйпеç вăтам шкулĕн вĕрентекенĕ;
Цыркунова Татьяна Леонарьевна,
Чăваш Республики, Вăрмар районĕ,
Мăнçырма вăтам шкулĕн вĕрентекенĕ.

**Тема (пай) ячĕ**: 2021 çул – Чăваш Республикинче Сăр тата Хусан хӳтлĕх чиккисене тунă паттăрсен çулталăкĕ. **Класс**: 5-11.

**Урок тĕсĕ:** виçĕ тапхăрлă урок.

**Харкамлăх результачĕсем:**

1) вĕренĕве кăмăлпа хутшăнма явăçни;

2) вĕренекенсен пурнăçри чăн çынсен аса илĕвĕсем урлă Чăваш Республикинче Сăр тата Хусан хӳтлĕх чиккисене тăвакансен ĕç паттăрлăхĕпе тивĕçлĕхне, чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕхне, çынлăхне хак пама пĕлни аталанни.

**Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем (пур предметпа та вĕренме кирлисем):**

1) харпăр хăй тĕллĕн ĕçлес-тăвас туртăм аталанни.

2) информацие пĕлес тата ăнланас ĕçре хавхаланса ĕçлени;

3) çĕнĕ информаципе ĕçлеме хăнăху аталанни; сăлтавпа тĕллев çыхăнăвне палăртма вĕренни.

**Предмет результачĕсем**: 1941-1942 çулĕсенче Чăваш Енри Сăр тата Хусан хӳтлĕх чиккисене тăвакансен хастарлăхĕпе чăтăмлăхĕ, тӳсĕмлĕхĕпе паттăр ĕçĕсемпе паллашни; хӳтлĕх чиккине тăвакансем хăйсен умĕнчи тивĕçне пурнăçланине пĕлни; тылри манăçнă фронт кĕрешӳçисен аллинче хĕç-пăшал мар – киркăпа лум, пуртăпа пăчкă, кĕреçепе наçилкка пулнине ăса хывни.

**Технологисем:** критикăллă шухăшлав аталантарас, информаципе коммуникаци, тĕпчевпе шырав, проблемăллă вĕренӳ, харкамлăха аталантарас технологисем.

**Словарь ĕçĕ:** Сăр – Сура, Хусан – Казань, хӳтлĕх – оборона, чикĕ – рубеж, траншея, окоп, дзот, дот, блиндаж, çĕр пӳрт – землянка, 1 кубометр çĕр – 1200 – 2000 килограмм (кг).

**Курăмлăх хатĕрĕсем:**

1. «Сăр тăрăхĕнче ĕçленĕ вăхăт (аса илӳ видеоролик): Владимирова Акулина Александровна (93 çул). Интервью авторĕ – Карина Григорьева (Чăваш Республики, Çĕмĕрле районĕ, Юманай вăтам шкулĕ); монтаж тăваканĕ – Светлана Сапожникова (Чăваш Республики, Çĕмĕрле районĕ, Якуртушкăнь вăтам шкулĕ), ертсе пыраканĕ – Албутова Надежда Михайловна (Чăваш Республики, Çĕмĕрле районĕ, Якуртушкăнь вăтам шкулĕ).

2. «Сăр тата Хусан хӳтлĕх чиккисене тунă вăхăтри тумтир тата ĕç хатĕрĕсем» сăн ӳкерчĕксен ярăмĕ. Фотограф – Виктория Зорина; монтаж тăваканĕ – Сергей Анатольевич Никитин (Чăваш Республики, Шупашкар районĕ, Тутаркасси вăтам шкулĕ, информатика учителĕ), ертсе пыраканĕ – Ишова Альбина Валентиновна (Чăваш Республики, Шупашкар районĕ, Тутаркасси вăтам шкулĕ). *(1-мĕш хушса пани).*

3. «Тылри манăçнă фронт: Чăваш Енри Сăр тата Хусан хӳтлĕх чиккисене тунă кĕрешӳçĕсем» схема таблица *(2-мĕш хушса пани).*

4. «Вăрман вăрттăнлăхĕсем» текст (Школьникова Луиза Петровна, Чăваш Республики, Йĕпреç районĕ, Эйпеç вăтам шкулĕ)

5. «Сăр тата Хусан хӳтлĕх чиккисене тăвакансен ĕç паттăрлăхĕ» сюжетлă ӳкерчĕксем (Аня Сидорова (8 класс), Надя Павлова (8 класс) (Чăваш Республики, Çĕмĕрле районĕ, Якуньушкăн вăтам шкулĕ).

6. Захаров Д.А. «История строительства Сурского и Казанского оборонительных рубежей на территории Чувашской АССР в 1941 – 1942 гг.». Куçараканĕ – Цыркунова Татьяна Леонарьевна (Чăваш Республики, Вăрмар районĕ, Мăнçырма вăтам шкулĕ) – «Чăваш АССР территорийĕнче 1941-1942 çулсенче Сăр тата Хусанти оборона рубежĕсем тунин историйĕ» *(4-мĕш хушса пани).*

**Урок эпиграфĕ:** Фронтпа тыл пĕрлĕхĕнче пирĕн вăй!

**Урок юхăмĕ**

| Урок тапхăрĕ | Вĕренекенсен ĕç-хĕлĕ | Мелпе меслетсем | Мелпе меслетсене пурнăçламалли тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| **I. Кăсăк-лантарни** (10 минут) | Вĕрентекене сывлăх сунни, хăйсем урока хатĕррине тĕрĕслени, вырнаçса ларни, инструктажа тимлĕ итлени. | Класа йĕркелени, сывлăх сунни. | Вĕренекенсене сывлăх сунни. Класа йĕркелени. Инструктаж пани. Сĕтел çинче выртакан тĕрлĕ тĕслĕ карточкăсемпе ĕçлемелли йĕркепе паллаштарни; урок вĕçĕнче тĕрлĕ тĕслĕ стикерсемпе усă курас пирки асăрхаттарни. |
| | Видеоролик пăхни, астуса юлни, пăхнă тата итленĕ материал тăрăх ку таранччен | 1. Видеролик пăхни. 2. «Хĕвел» кластер йĕркелени. | «Сăр тăрăхĕнче ĕçленĕ вăхăт (аса илӳ)» видеоролик геройĕ – Владимирова Акулина Александровна (93 çул). https://www.youtube.com/watch?v=CuWDxmpby |

<table>
<tr><td></td><td>мĕн пĕлнине тишкерни.</td><td></td><td>5Y&feature=youtu.be<br>Тезис çырса пыни, итленĕ-курнă материалти тĕп сăмахсене çырса хуни е хăйсем валли кластер йĕркелени.</td></tr>
<tr><td></td><td>Малтан илнĕ пĕлĕве аса илни.<br>Хатĕр карточкăпа ĕçлени: этем силуэчĕ патне хĕрача, арçын ача, ватă çын тумтир ячĕсене çырса пыни.<br>Ĕç-хатĕр ячĕсене юпапа çырса пыни, чăвашла-вырăсла куçару туни.</td><td>3. Курни-пăхни. (сăн ÿкерĕксен ярăмĕпе паллашни).</td><td>«Сăр тата Хусан хÿтлăх чиккисене тунă вăхăтри тумтир тата ĕç хатĕрĕсем» сăн ÿкерчĕксен ярăмĕ. Сăнар тăвакансем: Илья Ваняшин, Вадим Алексеев, Виктория Иванова, Полина Трофимова (9-мĕш класс ачисем), Альбина Валентиновна Ишова (Чăваш Республики, Шупашкар районĕ, Тутаркасси вăтам шкулĕ, чăваш чĕлхипе литрература учителĕ. Ÿкерекенĕ – Валерия Зорина. Хитрелетсе йĕркелекенĕ – Сергей Анатольевич Никитин (Чăваш Республики, Шупашкар районĕ, Тутаркасси вăтам шкулĕ, информатика учителĕ). Ертсе пыраканĕ – Ишова Альбина Валентиновна (Чăваш Республики, Шупашкар районĕ, Тутаркасси вăтам шкулĕ) (1-мĕш хушса пани).<br>3-мĕш карточкăри этем силуэчĕсем (хĕрача, çамрăк ача, ватă çын) патне тумтир ячĕсене<br><br>I.3 №-лĕ карточка<br>Этем силуэчĕсем (хĕрача, арçын ача) патне тумтир ячĕсене çырса пырăр.<br>Ĕç йĕрки: этем силуэчĕ патне (хĕрача, арçын ача) тумтир ячĕсене çырăр<br>Ĕç-хатĕр ячĕсене юпана çырса пырăр, чăвашла-вырăсла куçару тăвăр<br>Ĕç-хатĕр ячĕсем<br>чăвашла | вырăсла<br>çырни.</td></tr>
<tr><td></td><td>Хатĕр карточкăпа ĕçлени. Виçĕ юпаллă таблицăна тултарни.</td><td>4. «Пĕлетпĕр – пĕлес килет – пĕлтĕмĕр» мел.</td><td>I. 4-мĕш карточкăри виçĕ юпаллă таблицăна тултарни. Пĕрремĕш юпана вĕренекенсем çак темăпа мĕн пĕлнине пурне те палăртаççĕ; иккĕмĕш юпана – хăйсем умне лартнă ыйтусене çыраççĕ; виççĕмĕш юпана вĕренекенсем видеоролик, сăн ÿкерчĕксемпе роликран илнĕ çĕнĕ пĕлĕве çырса хураççĕ.<br><table><tr><th>Пĕлетпĕр</th><th>Пĕлес килет</th><th>Пĕлтĕмĕр</th></tr><tr><td></td><td></td><td></td></tr><tr><td></td><td></td><td></td></tr></table></td></tr>
<tr><td></td><td>Итленĕ-курнă материалпа усă курса «Пĕлетпĕр – пĕлес килет – пĕлтĕмĕр» мел тăрăх урок темин ятне пĕлни, урок тĕллевне тата эпиграфне палăртни.</td><td>5. Урок темипе тата урок эпиграфĕпе паллашни, тĕллевсене лартни.</td><td>Ачасем хăйсен тĕллĕн урок темине, тĕллевне тата проблемине палăртни. Ыйтусем çине хуравлани.</td></tr>
</table>

<table>
<tr>
<td rowspan="4">II. Ăнланса илни (25 минут)</td>
<td>Хатĕр карточкăпа ĕçлени. Учитель каласа пынă май икĕ юпаллă таблицăна тултарни. Шухăшлав функцийĕсене аталантарни: пĕтĕмлетӳ тата танлаштару (шухăшсен пĕтĕмлетӳллĕ танлаштарăвĕ).</td>
<td>1.»Тылри манăçнă фронт: Чăваш Енри Сăр тата Хусан хӳтлĕх чиккисене тунă кĕрешӳçĕсем» таблица тăрăх ирттернĕ учитель лекцийĕ.<br>2. Тухăçлă лекци мелĕн «Борт журналĕ» меслечĕ.</td>
<td>Вĕрентекен «Тылри манăçнă фронт: Чăваш Енри Сăр тата Хусан хӳтлĕх чиккисене тунă кĕрешӳçĕсем» таблицăпа усă курса лекци вуланă май вĕренекенсен ĕç-хĕлĕ (2-мĕш хушса пани).<br>II. 1-мĕш карточкăри икĕ юпаллă таблицăна тултарни. Пĕрремĕш юпана вĕренекенсем çак темăпа мĕн пĕлнине палăртаççĕ; иккĕмĕш юпана – учитель вуланă тата кăтартнă лекцинчен мĕн çĕннине пĕлнине (кăсăклине) çыраççĕ
<table>
<tr><td colspan="2">Тухăçлă лекци мелĕ<br>«Борт журналĕ»</td></tr>
<tr><td>Асăннă темăпа мана мĕн паллă (эпĕ мĕн пĕлетĕп?)</td><td>Лекцинчен мĕн çĕннине (кăсăклине) пĕлтĕм</td></tr>
<tr><td></td><td></td></tr>
<tr><td></td><td></td></tr>
</table>
</td>
</tr>
<tr>
<td>Сывлăха упрани.<br>Су-Джок мелĕпе алăсене массаж е «Кукамайăн сар чăххи» мелĕсемпе уса курса сывлав гимнастики туни.</td>
<td>3. Кану саманчĕ.</td>
<td>«Сăваплă вăрçă» («Священная война») юрă кĕввипе (юрă сăмахĕсем – В.И. Лебедев-Кумачăн, кĕвви – А.В. Александровăн) тĕрлĕ хускану туни.<br>Касăклă информаци: 1941 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнче пуçласа «Сăваплă вăрçă» кашни ир радиопа кремль куранчĕсем хыççăнах янăранă.</td>
</tr>
<tr>
<td>Тимлĕ итлени, шухăшлав ĕçне хăвăрт хутшăнни, факт сведе-нийĕсене астуса юлни, ыйтусем çине хуравлама хатĕрленни.</td>
<td>4. «Вăрман вăрттăнлăхĕ» текста вулани</td>
<td>«Вăрман вăрттăнлăхĕ» текст авторĕ Школьникова Луиза Николаевна (Чăваш Республики, Йĕпреç районĕ, Эйпеç вăтам шкулĕ) (3-мĕш хушса пани).</td>
</tr>
<tr>
<td>Ĕçе хăвăрт пурнăçлани, тимлĕхе, ас тăваслăха, логикăллă шухăша аталантарни.<br>Илнĕ информаци çинчен тĕрĕс сăмах çаврă-нăшĕсемпе усă курса каласа пама пĕлни.</td>
<td>5. Вăйă «Çапла» («Да») – «Çук» («Нет») вăйă</td>
<td>Текст тăрăх хатĕрленĕ ыйтусем çине хăвăрт хуравлани, «Çапла-çук» хуравланă хыççăн вĕренекен хăй мĕншĕн çапла шутланине ăнлантарса пани.</td>
</tr>
<tr>
<td>III. Рефлекси (10 минут)</td>
<td>Хатĕр карточкăпа ĕçлени. Виçĕ юпаллă таблицăри виççĕмĕш юпине тултарни.<br>Урокра илнĕ информацие анлăлатни, системăлани.</td>
<td>1. «Пĕлетпĕр – пĕлес килет – пĕлтĕмĕр» мел</td>
<td>Информацие пухас тата системăлас енĕпе таблицăна тултарни (информацие схемăлани).<br>4-мĕш карточкăри виçĕ юпаллă таблицăна тултарни. Пĕрремĕш юпана вĕренекенсем çак темăпа мĕн пĕлнине палăртаççĕ; иккĕмĕш юпана – хăйсем умне лартнă ыйтусене çыраççĕ; виççĕмĕш юпана вĕренекенсем учитель лекцийĕнчен, «Вăрман вăрттăнлăхĕ» текстран илнĕ çĕнĕ пĕлĕве çырса хураççĕ.</td>
</tr>
</table>

<table>
<tr>
<td></td>
<td></td>
<td></td>
<td>
<table>
<tr><th>Пĕлетпĕр</th><th>Пĕлес килет</th><th>Пĕлтĕмĕр</th></tr>
<tr><td></td><td></td><td></td></tr>
<tr><td></td><td></td><td></td></tr>
</table>
</td>
</tr>
<tr>
<td></td>
<td>Темăна çырура пĕтĕмлетни, тишкерни, пĕр пĕтĕмĕшле ăнла-нулăха ăша хывни.<br>Урокра пĕлнĕ информаци е ачасем ӳкернĕ сюжетлă ӳкерчĕксем тăрăх стикерсем çине синквейн çырни, вуласа пани, доска çине çыпăçтарни.</td>
<td>2.Синквейн çырни.<br>1-мĕш вариант. Сăр, Хусан, хӳтлĕх, чикĕ, окоп, дзот, блиндаж, çĕр пӳрт йышши сăмахсемпе синквейн çырни<br>2-мĕш вариант. Сюжетлă ӳкерчĕкпе усă курса синквейн çырни.<br><br>Аня Сидорова (8 класс). ЧР, Çĕмĕрле районĕ, Якуртушкăнь вăтам шкулĕ.<br><br>Надя Павлова (8 класс). ЧР, Çĕмĕрле районĕ, Якуртушкăнь вăтам шкулĕ</td>
<td>Пилĕк йĕркеллĕ рифмăсăр сăвă çырни. 1-мĕш йĕрке – япала ячĕ (пĕр сăмах е сăмах майлашăвĕ)<br>2-мĕш йĕрке – сăмаха сăнлакан икĕ паллă<br>3-мĕш йĕрке – сăмахăн ĕçне палăртакан виçĕ глагол<br>4-мĕш йĕрке – пĕтĕмлетӳ пĕлтерĕшлĕ предложени<br>5-мĕш йĕрке – пĕтĕмлетӳ сăмахĕ, метафора.<br>Асра тытатпăр: чăваш чĕлхи уйрăмлăхĕсене пула вырăс сăмахĕсене хăш-пĕр чухне сăмах майлашăвĕпе ăнлантарма лекет.</td>
</tr>
</table>


Литература

1.https://realnoevremya.ru/articles/64612-istoriya-sozdaniya-kazanskogo-obvoda Выдержки из книги Айслу Кабирова, Екатерина Кривоножкина и Алексей Бушуев. «Нам жить и помнить. Татарская АССР в годы Великой Отечественной войны (1941—1945 гг.)»

2. https://regnum.ru/news/2414869.html. По указу Сталина: засекреченная «круговая оборона» Чебоксар.

3. Цифаркин В.Е. «Астăвăм – Память». Книга памяти д. Чубаево Урмарского района Чувашской Республики. – Чебоксары, 2015. – С. 20-29.

4. Цифаркин В.Е. Казанский оборонительный рубеж «Казанский обвод». Строительство оборонительной линии в Урмарском районе: История. Документы. Факты. Воспоминания. Почитание. – Чебоксары, 2020. – 30 с.

5. https://ok.ru/video/2587165788848. Аудиохаçат.

## ХУШСА ПАНИСЕМ

***1-мӗш хушса пани***

**Сӑн ӳкерчӗксен ярӑмӗ**

«Сӑр тата Хусан хӳтлӑх чиккисене тунӑ вӑхӑтри тумтир тата ӗҫ хатӗрӗсем».

Ӳкерекенӗ – Валерия Зорина. Хитрелетсе йӗркелекенӗ – Сергей Анатольевич Никитин (Чӑваш Республики, Шупашкар районӗ, Тутаркасси вӑтам шкулӗ, информатика учителӗ).

Ертсе пыраканӗ – Ишова Альбина Валентиновна (Чӑваш Республики, Шупашкар районӗ, Тутаркасси вӑтам шкулӗ, чӑваш чӗлхипе литератури вӗрентекенӗ)









***2-мӗш хушса пани***

«Тылри манӑҫнӑ фронт: Чӑваш Енри Сӑр тата Хусан хӳтлӗх чиккисене тунӑ кӗрешӳҫӗсем»

1941 ҫулхи октябрӗн 13-мӗшӗнче СССР оборона Наркомачӗ ҫумӗнчи патшалӑх комитечӗ оборона строительствин тӗп управленине йӗркеленӗ.

1941 ҫулхи октябрӗн 16-мӗшӗнче Атӑлҫи оборона Комитечӗ Атӑлҫи оборона рубежне туса хурасси ҫинчен

| | | |
|---|---|---|
| йышăну тунă. Унăн трасси виçĕ республика (Тутар, Мари тата Чăваш республикисем) территорийĕпе 380 çухрăма тăсăлмалла пулнă. Тутар республикин территорийĕнче оборона сооруженийĕсем Хусан хули тавра çурма ункă туса çаврăннă (ăна «Хусан çаврăмĕ» тенĕ). Çак хӳтĕлев чикки Куйбышев (Самара) хулине сыхлама кирлĕ пулнă. Ку территори Атăл хĕрринче вырнаçнă Покровски ялĕнчен пуçласа Вăрмар станцийĕ урлă, Кайбица райцентрĕ тата Апас райцентрĕ урлă иртнĕ.<br>*Ку ĕçе Л. П. Берия пуçарăвĕпе хăрушсăрлăх Нарком комитечĕ ертсе пынă. Вăрçă вăхăчĕн условийĕнче ĕçе кайманнисене, хирĕç калаçакансене патшалăх преступникĕсем пек хакланă. Айăплисене 58-10 статья тăрăх (контрреволюцилле пропаганда) тата 58-14 статья тăрăх (контрреволюцилле саботаж) РСФСР уголовнăй кодексĕ чи пысăк майпа айăпланă, персе пăрахнă.* | | |
| **Чăваш АССР территорийĕнче 380 çухрăма яхăн хӳтлĕх чикки (оборона рубежĕ) иртмелле пулнă.**<br>Патшалăх хушнипе ку ĕçе тума специалистсенчен – 845 çын тата 160 çын килнĕ. | | |
| **ВĂРÇĂ**<br>1941 юпа (октябрь) – чӳк (ноябрь)<br>1942 кăрлач (январь) – нарăс (февраль) | 1. Хĕрлĕ Çар Мускавшăн кĕрешнĕ.<br>2. Ленинград блокадарăра пулнă.<br>3. Фашистсем Сталинград хули патне çывхарнă.<br>4. Хĕрлĕ Çар Кавказшăн çапăçнă.<br>5. Тăшмансем Ржевпа Вязьма патĕнче наступлени тунă. | |
| **ЧĂВАШ ЕНРЕ**<br>**6 (ултă)**<br>**ВЫРĂН КĔНĔ**<br>(Засекреченная «круговая оборона» Сталина) | Сталин кăтартăвĕпе çак чăтма çук йывăр вăхăтра уйрăм хуласем тавралла «çирĕп çавра оборони» хатĕрлемелле пулнă.<br>«Рекогносцировка ĕçĕсем» иттермелли хуласен списокне Чăваш Енри ултă вырăн — **Шупашкар, Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле** хулисем, **Вăрмар** тата **Вăрнар** поселокĕсем кĕнĕ. | |
| **СĂР тата ХУСАН ХӲТЛĔХ ЧИККИСЕМ** | **Сăр хӳтлĕх чикки:** Етĕрне районĕн Засурское (Засурье) сали – Хĕрлĕ Чутай районĕн Пантьăк (Пандиково) ялĕ – Улатăр районĕн Сурско-Майдан сали – Ульяновск облаçĕн чикки таран | **Хусан хӳтлĕх чикки:** Звенигово затонĕнчен пуçласа – Октябрьск сали урлă – Вăрмар районĕнчи Арапуç тата Энĕшпуç (Шоркистры) ялĕ – Тăвай районĕнчи Мучар (Можарки) ялĕ – Тутар АССР чикки таран кĕнĕ. |
| **ТĔП ТĔЛЛЕВ** | **Сăр хӳтлĕх чикки:** Çĕмĕрле, Улатăр хулисене, чукун çул станцине сыхласси.<br>Сталин кăтартăвĕпе çак условисенче уйрăм хуласем «çирĕп çавра оборони» хатĕрлемелле пулнă.<br>«Рекогносцировка ĕçĕсем» иттермелли хуласен списокне Чăваш Енри ултă вырăн — Шупашкар, Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле хулисем, Вăрмар тата Вăрнар поселокĕсем кĕнĕ. | **Хусан хӳтлĕх чикки:** Хусан хули. Чугун çул станцине сыхласси. Канаш хули. Вăрмар тата Вăрнар поселокĕсем.<br>1941 çулхи кĕркунне нимĕç авиацийĕ Хусанти чукун çул çине бомбăсем парахнă. Хулана тĕттĕмлетме пуçланă. Патшалăх оборона комитечĕ йышăннипе область организацине тата Хусанти оборона комитетне тăшмана Хусан хулипе хула çывăхне тата Атăл урлă Кубышев (Самара) хули патне инçетри тыла кĕртес мар тесе Хусан хули çывăхĕнче хӳтлĕх чиккисем (оборона рубежне) тума явапланă. |
| **ВĔÇЛЕНĔ** | Сăр хӳтлĕх чиккине 1942 çулхи январĕн 20-мĕшĕнче вĕçленĕ. | Хусан хӳтлĕх чиккине 1942 çулхи январĕн 25-мĕшĕнче вĕçленĕ. |
| **ПЛАН** | **Сăр хӳтлĕх чиккине** тума палăртнă план: 115 пин çын. | **Хусан хӳтлĕх чиккине** тума палăртнă план: 45 пин çын. |
| **ФАКТ** | Чикĕ тăвас ĕçе куллен вăтамран **85 пин çын** хутшăннă, хăш-пĕр чухне çак цифра **110 пине** те çитнĕ. | |
| **ĔÇЛЕКЕНСЕМ** | Çĕр виçекенсем (землемерсем), вăрман ăстисем (лесниксем), хĕрарăмсем, шкул | |

<table>
<tr><td></td><td colspan="3">ачисем, яш ачасем, хĕрсем, студентсем, ватă çынсем.</td></tr>
<tr><td rowspan="6">ХЎТЛĔХ ЧИККИНЧИ ЁÇСЕМ<br><br>Çĕр чавни<br>Пĕр кубра (1 м3) 1200-2000 килограмм (кг). Пĕр кун планĕ – 3-4 м3 пулнă, апла пулсан кашни çыннăн кунне 4800 кг çĕр кăлармалла пулнă.<br><br>Йывăç касни, вутă туни<br>Пĕр кун планĕ – 3-4 м3 пулнă.<br>.</td><td colspan="3">Сăр тата Хусан хўтлĕх чиккинче 5 миллиона яхăн кубометр çĕр (грунт) кăларнă, 2347 вут-çулăм точка (тимĕр-бетон артиллери дотĕсем, пулемет дзочĕсем, бронеколпаксем тата миномет площадкисем) тата 1970 çĕр пўрт йĕркеленĕ.</td></tr>
<tr><td>Хусан хўтлĕх чиккин вăрăмăшĕ 331 çухрăм пулнă.<br>Çав шутра танка хирĕç кĕрешме тунă шăтăксем, 79,61 çухрăм эскарпсем, 1,96 çухрăм контрэскарпсем пулнă. Командир тата командăпа сăнав (наблюдательнăй) пункчĕсем 98, вăрттăн вут-çулăм (огневой) точкисем, танкăн 45-мм снарядĕнчен тата 12-76 мм тупăсен снарячĕсенчен сыхланмалли 44 дзот 419 çĕр пўрт тунă.</td><td colspan="2">Сăр хўтлĕх чикки тăрăх – 1607 вут-çулăм точкисем тата 1490 çĕрпўрт тунă.<br>Чăваш Ен территорийĕнче туса лартнă оборона сооруженийĕсен 1 çухрăмра вăтамран 6 артиллери (ДОТ) тата пулемет пемелли (ДЗОТ) точкăсем, çавăн пекех миномет площадкисем (блиндаж) пулнă.</td></tr>
<tr><td>Траншея. Пĕтĕм кĕлеткепе кĕрсе тăмалли вырăн, унăн тăршшĕ темиçе çухрăм таранах пулнă.</td><td rowspan="2">380 çухрăм</td><td></td></tr>
<tr><td>Окоп. Тăшман пулинчен хўтĕленме вăхăтлăха кĕрсе выртма чавнă вырăн, вăл тарăн пулман.</td><td></td></tr>
<tr><td>Çĕрпўрт. Тăршшĕ 8 м, сарлакăшĕ 4 м, шалти çўллĕш 1,5-2 метр.</td><td>1490 çĕр пўрт</td><td></td></tr>
<tr><td>Блиндаж. Пулемет, артиллери, миномет вучĕсенчен, массăллă атакăран тата йышпа канма тунă яланлăх е вăхăтлăх фортификаци сооруженийĕ. Хăйĕн конструкцийĕпе çĕр айне тарăнлатнă пурана аса илтерет. Блиндаж: тăршшĕ 3.5 метр, сарлакăшĕ 1.2 метр, çўллĕшĕ 1.8 метр. Блиндаж валли 3.3 кублă çаврака вăрман йывăçĕ кирлĕ, хўтĕлев хулăнăшĕ – 14 см (натат) тата 90 см пĕренесем. Çак хулăмĕш минометсен 120 мм калибрлă снарядĕнчен хўтĕлет.</td><td colspan="2"></td></tr>
</table>

| | | |
|---|---|---|
| | **Дзот** («деревоземляная огневая точка» – йывăçран тата çĕртен тунă вут-çулăм точки, Дзота ялан тенĕ пекех пурапа е хăмапа çирĕплетнĕ, Чавса тунă ăшăтман çĕр пӳрт. Ăна пĕренесемпе витнĕ. Тăрринче тар газĕсем тухма тăрпа тунă. Çӳлтен дзот йывăç виткĕçне çеремпе витнĕ. Тăшман еннелле пулеметпа пемелли амбразура вырнаçнă. Амбразура ДЗОТра темиçе те пулма пултарнă. |  |
| | **Дот** – нумай вăхăт хушши вут-çулăм тытмалли хӳтĕлев точки. Çĕр пӳрт, пĕренесене виçĕ сий хунă, çиелте тăпра. Дотсене монолит е тимĕр-бетонран, растворпа чулран, арматурăллă тимĕр балкăсенчен тата броня хупă хучĕсенчен тунă. ДОТ тăшман вут-çулăмĕпе (пульăсемпе, осколкăсемпе, минăсемпе, снаряд-семпе авиабомбăсем çурăлнинчен) хӳтĕлет тата тăшмана амбразура витĕр тăшмана пеме май парать. |  |
| | **Эскарп –** оборона рубежĕ тунă чухне тикĕс мар вырăнта тăшманăн танкне тӳнтерес тесе тунă чăрмав. Ăна тайлăм (откос), хысак (скат) е чăнкă тăвайкки теççĕ. Пысăк кĕтессипе çыранĕн мал енне 2-2,5 метртан касса тунă чанкă хысак (15° градусран пуçласа 45° таран тайлăк пулмалла). |  |
| | **Танка хирĕç кĕрешме тунă шăтăк (противотанковый ров).** Çӳллĕшĕ – 3,5 м, тарăнăшĕ – 2,5 м. | <br> |
| | **Командирăн сăнав пункчĕ** | |

| | | |
|---|---|---|
| | **(наблюдательный пункт)**. Командирăн сăнав пункчĕ малти лининрен 800 метртра аяккарах, взводсен опорнăй пункчĕсем хыçĕнче вырнаçнă. Кунĕн-çĕрĕн сăнамалли вырăн. | |
| **ПАТТĂРЛĂХ** | Сăмахран. 1. Калинин районĕнчи «Ĕç» колхозăн çамрăксен бригади йышĕнче 18 çын çĕр ĕçĕсен нормине 220 процент чухлĕ пурнăçланă.<br>2. Семенов вăтам шкулĕнче 9-10 классенче вĕренекен 18 ача 3-4 кубометр пулмалли нормăна тултарнă, 8-10 кубометр çĕр кăларнă.<br>3. Ишлей районĕнчи «Тукас» колхозри хĕрарăмсен бригади кашни кун нормăна 225% тултарнă.<br>Строительство вĕçленсе пынă çĕре шутласа кăларнă тăрăх, 15 пин ытла çын нормăна тултарнă, вĕсенчен 7848 çын нормăна ик çĕр хут тултарнă. | |

*3-мĕш хушса пани*

**Вăрман вăрттăнлăхĕ**

Текст авторĕ – Школьникова Луиза Николаевна (Чăваш Республики, Йĕпреç районĕ, Эйпеç вăтам шкулĕ)

Йĕпреç, Улатăр тăрăхĕсем мĕн авалтанпах сĕм-сĕм хура вăрмансемпе хупланса тăнă. Кунта тĕрлĕ йывăç ÿснĕ: Йĕпреç енче хутăш вăрман пулнă, Улатăр еннелле вара ытларах юман тата хыр йывăççисем кашласа ларнă. Чăваш халăх поэчĕ Çемен Элкер те хăйĕн «Хĕн-хур айĕнче» хайлавĕнче çаплах çырнă:

Илемлĕ, аслă çакăнти вăрман.

Пĕр-икĕ ĕмĕр пирĕнтен авал

Вĕçĕ-хĕрри ун ниçта курăнман.

Ик-виç çĕр çулхи яштак хырсем

Кармашнă унта пĕлĕте пăхса…

1941–1942 çулсенче вăрçа ăсатма ятарласа çирĕп йывăççене каса-каса ăсатнă: карапсем ăсталама юман, шăрпăк тума ăвăс, фанера валли хурăн кирлĕ пулнă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенче те, вăрçă хыççăн та чукун çул çине валли питĕ нумай вутă ăсатнă. Вăрман касасси пĕрре те çăмăл ĕç пулман, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра бензопăчкăсем пулман, алă пăчкипе татнă. Унсăр пуçне, çамрăксемпе вăй питти арçынсем фронтра пулнă, çавăнпа та вăрман касма хĕрсемпе хĕрарăмсем е ватă çынсем кайнă. Уйрăмах юмана касма йывăр пулнă, хыра вара – çăмăлрах. Ĕмĕрхи юмансен диаметрĕ пĕр метр ытла пулнă. Çавăнпа та пĕр юман касса антарма нумай вăй хумалла пулнă.

Окопсем, траншейăсем чавма та вăрçă вăхăтĕнче хĕрсемпе хĕрарăмсенех кайма тивнĕ. Юман тымарĕсене чавса кăларма уйрăмах йывăр пулнă, мĕншĕн тесен ватă юмансен тымарĕсем çĕр айне 30-50 метр тарăнăш анса кайма пултараççĕ. Хыр тымарĕсем вара, юманпа танлаштарсан, çиелте сарăлса выртаççĕ, çавăнпа та вĕсене тасатма çăмăлрах пулнă.

Блиндажсем тунă çĕрте ытларах çавракa йывăçпа усă курнă. Хăма çурмалли станоксем пулман, алăпа çурас пулсан питĕ нумай вăхăт иртет. Вăрçă вăхăтĕнче пĕр минут та çухатма юраман, кирек мĕнле ĕçе хăвăрт тумалла пулнă, çавăнпа та блиндаж тăррине те, стенисене те çавракa пĕренесенчен тунă: юпа вырăнне икĕ енне йывăç тăратнă, çÿлти пĕренесене ÿкмелле мар хире хирĕç хурса çыхса пынă. Вăрман варринче кирек хăçан та хÿтлĕх тупма пулать. Окоп, траншея чавакансем ÿплесем туса ăшăннă. Выртма вĕсем яланах чăрăш лăсси суйланă,

мĕншĕн тесен хыр лăсси сивĕ. Çунтарма, паллах, типĕ туратсем çунтарнă, анчах вăл питĕ хăвăрт çунса пĕтет, çавăнпа та сухăрлине çунтарма тарăшнă (хыр сухăрлăрах).

*4-мĕш хушса пани*

**Чăваш АССР территорийĕнче 1941–1942 çулсенче Сăр тата Хусанти оборона рубежĕсем тунин историйĕ**

(Д. А. Захаров çырнă «История строительства Сурского и Казанского оборонительных рубежей на территории Чувашской АССР в 1941–1942 гг.» статьяна куçараканĕ – Цыркунова Татьяна Леонарьевна (Чăваш Республики, Вăрмар районĕ, Мăнçырма вăтам шкулĕ).

2021 çулта Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа тата çĕршыв тылĕнчи оборона сооруженийĕсем тума тытăннăранпа 80 çул çитет. Вĕсем Вăта Атăлпа Урала тăшмансем туртса илесрен хӳтĕлеме кирлĕ пулнă.

1941 çулхи октябрь пуçламăшĕнче фронтра стратегилле лару-тăру тата кăткăсланнă: тăшман Раççейĕн тĕп районĕсене вирхĕнсе кĕрсе Мускава ярса илессипе хăратнă. Кăткăс лару-тăрура çĕршывăн тылри регионĕсене çавăрса илнĕ анлă оборона сооруженийĕсене туса хурасси чи пысăк тĕллевсенчен пĕри пулнă. СССР Патшалăх Хӳтĕлевĕн Комитечĕн йышăнăвĕпе 1941 çулхи октябрĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа Оборона комиссариачĕ çумĕнчи Оборона строительствин Тĕп Управленине йĕркеленĕ, çавăн пекех унăн ĕçĕсен планне çирĕплетнĕ. Ун тăрăх икĕ оборона линийĕ туса лартмалла пулнă. Оборона объекчĕсене 1941 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕччен туса пĕтермелле пулнă. Çапла вара, Атăл çыранĕсем тăрăх çĕнĕ стратегиллĕ оборонăн çĕнĕ эшелонне тумалла пулнă.

Чăваш АССР территорийĕнче çирĕплетнĕ схемăпа килĕшӳллĕн 380 çухрăма яхăн 2 оборона рубежĕ иртмелле пулнă: пĕри – «Сăр оборона рубежĕ», тепри – «Хусан обвочĕ».

Оборона рубежне тунă çĕре 17 çулхи çамрăксенчен пуçласа ваттисене, арçынсемпе хĕрарăмсене, рабочисемпе колхозниксене, уйрăм хуçалăхпа пурăнакан хресченсене, служба тата кил хуçи арăмĕсене мобилизациленĕ. Рабочисен хĕллехи пекех тумланмалла, хăйсемпе пĕрле кĕпе-йĕм, алшăлли, алсиш, вырăн хатĕр-хĕтĕрсем, котелок е чашăк, кашăк, кĕреçе илмелле пулнă. Ĕç хатĕресемпе çапла тивĕçтернĕ: 5 çын пуçне пĕр пуртă, 20 çын пуçне пĕр лум тата 10 çын пуçне пĕр наçилкка.

Мобилизациленĕ халăха ĕç бригадисем 50-шер çын пĕрлештернĕ. Чăваш Енрен 171450 рабочи, 13660 юланутçă (10810 лаша) мобилизациленĕ, 303 трактор янă.

Кашни кун строительствăна вăтамран 85 пин çын хутшăннă, уйрăм тапхăрсемпе вара çав цифра 110 пин çын таран хăпарнă. Строительство вăхăтĕнче канмалли кун пулман, чи вăйлă сивĕ кунсенче те, 40 градусра, ĕç чарăнман. Çĕр ĕçĕсен тухăçлăхĕ çын пуçне 1,42 кубометр шутланнă.

Анчах тепĕр чухне пачах урăхла пулса иртнĕ. Час-часах çынсене васкавлăн, ăнлантарусăр янă. Нумайăшĕ хăйсемпе пĕрле улăштарма кĕпе-йĕм те, ăшă тумтир те, атă-пушмак та илме пултарайман. Чи ансат ĕç хатĕрĕсемпе – кĕреçе, кирка, кувалдăсемпе – çынсем Хусан еннелле оборона сооруженийĕсем тума пултарнă.

**19**41-мĕш çулхи кĕркунне питĕ ир пуçланнă. Вĕçĕ-хĕррисĕр çумăр çунă, чăтма çук пылчăк тăнă, унтан сивĕ пуçланнă. Çара çерем лаптăкĕсем метр çурă таран шăнса хытнă. Сивĕ 40 градуса çитнĕ-çке! Ĕçлекенсенчен 75 проценчĕ хĕрарăмсен пулнă! Ĕç кунĕ 16-17 сехет пулнă, унсăр пуçне окопсем патне çитме темиçе çухрăм утнă. Малтанлăха кунне пĕрер килограмм çăкăр панă, каярахпа нормăна 800 грамм таран чакарнă. Вырăнти çынсем выçă

хĕрарăмсемпе çамрăксене тăрантарнă, анчах вĕсене хăйсене те çăмăл пулман вĕт. Апат çитмен. Колхозсем пурте хăйсен çыннисене апат-çимĕçпе тивĕçтерме пултарайман. Сивĕ, выçă пулнă.

Йывăр ĕçе ĕçлеме техника пулман. Вăйлă лашасене фронта илсе кайнă. Лаша вырăнне ирĕксĕрех вăкăрсене вĕрентнĕ. Çапла ĕçленĕ те. Асапланнă ĕнтĕ, анчах плана пурнăçланă.

СССР ГКО кăтартăвĕпе килĕшӳллĕн сывлăш температури 30 градусран сивĕренх пулсан ĕçлемелле мар пулнă. 1941 çулхи декабрĕн 2, 6, 7-мĕшĕсенче температура 30 градусран та сивĕрех пулнă. Анчах 30 градус сивĕ пулин те ĕç чарăнса тăман, чарăнса тăма пултарайман та. Патшалăх Оборона Комитечĕн заданийĕсене пурнăçласси чыслă ĕç пулнă. Ĕçрен пăрăнакансем пулман темелле. Ĕç ертӳçисем çынсене хавхалантарма пĕлнĕ – агитаципе пропаганда енĕпе ăстаçăсем пулнă, анчах хăратмалли меслетсемпе те усă курма пултарнă.

Пĕтĕм йывăрлăха, взрывчаткăпа механизмсем çуккине пăхмасăрах ĕç палăртнă вăхăт тĕлне вĕçленнĕ.

Сăр оборона рубежне 1942 çулхи январĕн 20-мĕшĕнче, Хусан обводне – 1942 çулхи январĕн 25-мĕшĕнче вĕçленĕ.

Йывăр пулнă. Строительство ĕçĕсене алăпа пурнăçланă.

Пилĕк миллиона яхăн кубометр çĕре алăпа туртса кăларнă.

2015 çулта Вăрмар районĕнчи Чупай ялĕнче оборона сооруженийĕсене тăвакансене чысласа палăк уçнă.

Оборона рубежне тунă чухне халăх паттăрлăхĕпе хастарлăхĕ, унăн тӳсĕмлĕхĕ, кирек мĕнле майпа та çĕнтерме çирĕп шут тытни уççăн палăрнă. Сивĕ хĕл, йывăр ĕç хăйсем çинчен пĕлме панă – нумайăшĕ чирленĕ, анчах та вĕсем ĕçрен пăрăнман, хăйсен ирĕкĕпе строительствăна хăварман. Чирлисене санчаçсенче сипленĕ, госпитальте вырнаçтарнă.

Кашни бригадăра агитаторсем пулнă. Вĕсем ыттисене валли хаçатсем вуланă, радиопа паракан хыпарсене, СовИнформбюро сводкисене пĕлтернĕ. Колхозсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлени çынсене хавхалантаратнă. Тăрăшни сая кайман: правительство постановленине срокчен пурнăçланă. Хусан обводне туса пĕтерни çинчен Мускава 1942 çулхи кăрлач уйăхĕн 25-мĕшĕнче пĕлтернĕ. Танка хирĕç кĕрешме тунă шатăксем кăна 100 çухрăма яхăн пулнă. Линие тунă чухне хĕрарăмсемпе çул çитмен ачасем хăйсене шеллемесĕр ĕçленине палăртнă.

Хĕрлĕ Çар тăшмана Мускав патне çитеспе чарнă, ăна Сталинградри çапăçура çапса аркатма пуçланă. Сăр тата Хусанти оборона рубежĕсем аслă вăрçăн çапăçăвĕсене тӳссе курман, анчах вĕсем тылри паттăрлăхпа çирĕплĕхĕ, чăваш çеренчи ял халăхĕ малашнехи çĕнтерӳве ĕненнине лайăх кăтартса панă.

Вăрмар район территорийĕнче халĕ те оборона линийĕсен йĕрĕсем палăраççĕ. Аслă ăру вĕсем мĕнлерех курăннине лайăх астăвать. Шел те, вĕсем çинчен асăнмалли паллăсемпе кăтартусем ниçта та палăртман. Кашни ялта Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçин паттăр салтакĕсене чысласа палăксем пур, апла тылра хастар ĕçлекенсен палăкĕсем те пулмалла. Вăрмар районĕнче тылра ĕçленĕ çынсене халалласа пĕрремĕш палăка 2015 çулта Чупай ялĕнче лартнă.

2010 çулхи майăн 4-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Октябрь тата Карапаш ял поселенийĕсен чиккинче Хусанти оборона рубежне чысласа обелиска уçнă.

2010 çулхи майăн 7-мĕшĕнче Тăвай ялĕнче «Тыл ĕçченĕсен» стеллине уçнă.

2021 çулта Сăр рубежĕпе Хусан оборонин чиккисене тума тытăннăранпа 80 çул çитет.

«Паттăрсен ячĕсем яланах пулмалла. Чăваш Енре Сăр юханшывĕ хĕрринче окоп чавнă. Хӳтĕлев рубежĕн линине (каярахпа ăна «Сăр рубежĕ» тенĕ) 1941 çулхи октябрь уйăхĕнче, нимĕçсем Мускав çывăхĕнче тăнă чухне, тума тытăннă. Çакăн пек пысăк ĕçе кĕске вăхăтра тунă, ăна Шупашкар ГЭСĕ, Химпром строительство ĕçĕсемпе те танлаштарма май çук. Çулталăк хушшинче Шупашкар ГЭСне тунă чухнехи пекех çĕр чавнă.

Чăваш Енре Сăр оборона рубежне тата Хусан обводне тумалли темăна патшалăх статусне парĕç, ун çинчен асăнмалăх та ĕмĕр-ĕмĕре юлĕç. Пирĕн тивĕç – тылри паттăрлăха ĕмĕрлĕхех упрасси», – тесе пĕлтернĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев.

**Приложение 2.6**

## Внеклассное мероприятие по теме «Все для фронта, все для Победы – строительство Сурского и Казанского оборонительных рубежей»

Николаева Ирина Апполоновна,
преподаватель Новочебоксарского
химико-механического техникума
Минобразования Чувашии

**Цель:** воспитание чувства гражданственности и патриотизма, гордости и сопричастности к истории страны, уважения к ветеранам войны и труда, развитие творческого потенциала студентов.

**Задачи**:

Обучающая: осмысление студентами исторического значения победы нашего народа в Великой Отечественной войне, вклада СССР в разгром фашизма во Второй мировой войне.

Развивающая: развитие мировоззренческих убеждений студентов, расширение их социального опыта, развитие способностей сопоставлять различные версии и оценки исторических событий и личностей.

Воспитательная: воспитание гражданственности, патриотизма, уважения к Родине, определение личностного отношения к истории Великой Отечественной войны.

**Планируемые результаты:**

*Личностные:*

1. Уметь высказать свое мнение о значении Победы в жизни России и мира.
2. Развивать мышление, память и внимание;
3. Развивать интерес к историческому прошлому своей Родины.

*Предметные:*

1. Называть года, районы строительство Сурского и Казанского оборонительных рубежей.

2. Причины строительства Сурского и Казанского оборонительных рубежей в годы Великой Отечественной войны.

3. Участники строительства оборонительных рубежей.

*Метапредметные:*

1. Анализировать и извлекать информацию, и отвечать на поставленные вопросы к мероприятию;
2. Сравнивать исторические процессы и делать выводы;
3. Работать с историческими источниками.

**Тип мероприятия:**внеклассное мероприятие в рамках проекта «Памятные даты», приуроченного к 75-летию Победы и акции «Героические страницы оборонительных рубежей Чувашии».

**Форма мероприятия:** круглый стол.

**Методы обучения:** проблемный рассказ, эвристическая беседа, учебная дискуссия.

**Межпредметные связи:** история.

**Средства обучения**: презентации студентов и преподавателя, видео материалы.

**Ход внеклассного мероприятия**

Вступительное слово преподавателя:

Слайд 1: Преподаватель: Добрый день уважаемые студенты, дорогие гости! Разрешите мне начать сегодняшний классный час. Тема нашего внеклассного мероприятия «Всё для фронта, всё для Победы - строительство Сурского и Казанского оборонительных рубежей». Сегодня мы должны обобщить полученные знания, стимулировать познавательную активность, развивать мышление, речь и умение выступать перед аудиторией.

План мероприятия:

- ознакомление информацией о строительстве Сурского и Казанского оборонительных рубежей;
- прочитаем стих «На Сурском оборонительном рубеже»;
- прослушаем ваши выступления по темам;
- обсудим вопросы за круглым столом.

Ведущий: исторический экскурс.

Слайд 2: На рассвете 22 июня 1941 года фашистская Германия вероломно напала на Советский Союз. Вражеская авиация нанесла массированные удары по аэродромам, железнодорожным узлам, военно-морским базам, воинским частям и многим городам нашей страны.

Звучит запись

Левитан «О начале войны». «Священная война»

Слайд 3: Ведущий: 80лет назад прозвучали последние залпы Великой Отечественной войны. Все дальше в историю уходят эти дни, все меньше остается живых свидетелей, и тем ценнее и дороже для нас сохранившиеся сведения того времени. Сегодня, необходимо снова оглянуться назад, вспомнить боевые и трудовые подвиги военных лет. Среди них - строительство оборонительных сооружений Сурского оборонительного рубежа, которое осуществлялось зимой 1941-1942 годов и стало самой крупной кампанией по мобилизации населения на трудовую повинность.

Впервые дни войны, преодолевая огромные трудности, они заменили своих мужей, отцов и братьев у станков, осваивали их специальности и с каждым днем повышали свои производственные показатели. Их труд золотыми буквами вписан в героическую летопись истории нашей Родины.

Слайд 4. Выступление студентов - читают стихи

На Сурском оборонительном рубеже

(Автор Майоров Н.И. – учитель истории, д. Кудеиха, Порецкий район, Чувашская Республика)

Студент 1

Здесь не сшибались в битве брони,
Не погибал за взводом взвод,
Враг не дошел, но к обороне
И здесь готовился народ.
Здесь сделано все, что не сделали б Боги,
Руками невест, матерей и жен,
От Пензы далекой до матушки Волги
Оборонительный рубеж сооружен.
Здесь было все, что нужно в обороне:
Окопы, Доты, Дзоты, блиндажи,
Займи рубеж и защищайся, воин.
Хоть умирай, а берег удержи.
Враг не дошел: страна остановила.
Разбит под Тулой, угнан от Москвы,
Здесь кровь бойцов не обагрила
Под осень высохшей травы.

Студент 2

Здесь самолеты не кружили,
Бросая смертоносный груз,
Здесь наши женщины крушили
Промерзший на два метра грунт.
Здесь роем пули не летели,
Не лезли танки на откос,
Здесь наши женщины потели
В сорокаградусный мороз.
Не гибли люди в обороне,
От пуль здесь не было смертей,
Здесь кровь сочилась из ладоней
Уставших насмерть матерей.

Студент 3

Снаряды здесь лесов не рвали,
Вздымая землю к небесам,
Здесь в тайне девушки рыдали
По ТАМ погибшим женихам.
Здесь нет дымившихся воронок,
Залитых кровью по краям,
Здесь стон стоял от похоронок
По ТАМ схороненным мужьям.
Враг не дошел, он западней разбит был,
Вдали от этих Сурских рубежей,
Враг не дошел, но все равно СПАСИБО

Строителям безмолвных блиндажей.

Выступление студентов (презентации и доклад) по следующим темам:

1. Сурский оборонительный рубеж сегодня. Историческая память (Лямкина А.).

2. Сурский рубеж. Дрались за высокую производительность труда (Николаева Я.).

Ведущий:

Слайд 5. Сурский рубеж обороны проходил на территориях Марийской, Чувашской, Мордовской АССР, Горьковской, Пензенской, Саратовской и Ульяновской областей.

На территории Чувашии организовали 6 военно-полевых сооружений: 4 по Сурскому рубежу – с центрами в Ядрине, Шумерле, Порецком, Алатыре; и 2 на Казанском направлении – в сёлах Октябрьское и Янтиково.

Слайд 6. Военное строительство проходило в тяжелейших условиях, требовавших от рабочих большого приложения физических сил, выносливости. Работы в основном велись вручную, без применения взрывчатки, при этом остро испытывался недостаток в инструментах. При сильных морозах землю сначала оттаивали кострами, а затем ее кусками откалывали с помощью клиньев.

Слайд 7. Преподаватель:

К сожалению, время берет свое и с каждым годом все меньше и меньше остается людей, принимавших непосредственное участие в сооружении этих рубежей. И один из них – Кузьма Трифонов, которому в феврале следующего года исполнится 90 лет.

Можно смело заявить: Кузьма Трифонович сегодня является единственно живым из мужчин, кто возводил Сурский рубеж. Более того, он был самым молодым строителем этой оборонительной линии, ведь ему в то время исполнилось всего 10 лет.

Слайд 8. Ведущий:

Кузьма Трифонович сам лично не копал землю. Но у него была не менее важная миссия – ухаживать за лошадью, которая была главной тягловой силой на строительстве.

На своей лошади он в основном занимался подвозкой леса. За лошадью нужен был постоянный уход: надо было кормить, поить теплой водой, укрывать от морозов попоной. А холода были жуткие, под сорок градусов. На ночь уезжали в близлежащую деревню. Спали в избах, в банях. Конечно, мест всем не хватало, часто спали вповалку на полу.

Слайд 9. Ведущий:

Несмотря на многочисленные трудности, голод, холод и болезни, мобилизованное население Чувашии героически выполняло поставленный перед ними план. Строительство Сурского рубежа было завершено 20 января 1942 года, а Казанского обвода – 25 января 1942 года.

Слайд 10. За короткий срок строительства сделано было практически невозможное – построено 380 км оборонительных конструкций: вынуто около 5 млн. кубометров грунта, оборудовано 2347 огневых точек, 1970 землянок.

На протяжении 1942-1943 г.г. укрепления поддерживались и ремонтировались, но война всё дальше уходила на запад, и стратегическая необходимость в них со временем отпала:

Война к Суре не подходила,

Сгорел внезапности запал.

Но для нее и здесь «могилы»

Народ и день, и ночь копал…

Слайд 11. Ведущий:

За героический труд в тяжелых условиях Почетными грамотами Президиума Верховного Совета Чувашской АССР было награждено 167 человек, занесено в республиканскую Доску почета – 280 человек.

Слайд 12. Ведущий:

В память о подвиге тружеников тыла в районах строительства рубежей установлены обелиски и памятные знаки. Война явилась тяжелым испытанием для нашего народа. Жители Чувашии достойно выполнили свой долг на фронте и в тылу, внесли заметный вклад в Победу.

В целях увековечения трудового подвига, мужества, героизма и самоотверженности участников строительства в 1941 году Сурского и Казанского оборонительных рубежей 2021 год в Чувашии объявлен Годом, посвященным трудовому подвигу строительства Сурского и Казанского оборонительных рубежей.

«Наш нравственный долг – вместе изучить забытый подвиг тыла и увековечить память исторического прошлого», – заявил Главы Чувашии Олег Николаев.

**Предлагаемые вопросы для обсуждения:**

1. В каких годах проходило строительство Сурского и Казанского оборонительных рубежей?

2. Что явилось причиной строительства Сурского и Казанского оборонительных рубежей в годы Великой Отечественной войны?

3. В каких районах Чувашской Республики проходило строительство оборонительных рубежей?

4. Кто были участниками строительства оборонительных рубежей?

5. Сколько ежедневно человек трудились на строительстве оборонительных рубежей?

6. С какими трудностями столкнулись участники строительства?

7. За какое время были построены оборонительные рубежи?

8. Какова была протяженность построенных оборонительных сооружений?

9. Кого можно назвать героями войны? (предполагается ответ, что героями являются не только те, кто воевал на фронте, но и труженики тыла).

10. Можете ли вы привести примеры героизма в настоящее время?

11. Какой вклад вы можете внести в увековечение памяти трудового подвига строителей оборонительных рубежей Чувашии?